24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1941 АПРЕЛЬ 12 ШАМАТКУН 86 (5801) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

КУЛЛЕН КИРЛĔ ТАВАРСЕМ ЫТЛАРАХ ТУСА КĂЛАРАР!

Виçĕ уйăх каярах, январĕн 9-мĕшĕнче, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Вырăнти чĕртаварта куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви тăвассине ӳстермелли мероприятисем çинчен» постановлени йышăнчĕç. Партипе правительствăн постановленийĕ вырăнти промышленноçа хăвăрт аталантарса пыма кирлĕ условисем туса пачĕ. Çак постановлени чылай районсенче куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви туса кăларас, çавнашкалах халичченхи производствăсене аслăлатас тĕлĕшпе вырăнти Советсен пуçарулăхне хăватлăн çĕклерĕ.

Пирĕн республикăра куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине ӳстерме чĕртаварсем çителĕклĕ. Республика вăрман тата ытти чĕртаварсем тĕлĕшпе пуян. Продовольстви тăвассине вăйлатма та пысăк майсем пур.

Партипе правительство постановленийĕ тухнăранпа республикăри хăшпĕр организацисем тата вырăнти Советсем куллен кирлĕ таварсем туса кăларас енĕпе чылай ĕçсем туса иртерчĕç. Çĕмĕрлери вăрман хуçалăхĕ, пĕрремĕш кварталти плана тултарса, куллен кирлĕ таварсене 80 пин тенкĕлĕх туса кăларчĕ, «Красный Октябрь» артель куллен кирлĕ таварсем туса кăларма çĕнĕрен икĕ цех организациленĕ. Шупашкарти «Металлист» артель кăмака питлĕхĕсем, лӳшкĕсем туса кăларать. Чылай предприятисемпе артельсенче (делялсем, сеткăсем, улăмран сыхнă пилепхесем, яча-пачасене вылямалли тетте-япаласем кăларма тытăннă.

Шăхасанра райсовет исполкомĕ пуçарнă тăрăх, тир-сăран тумалли мастерской тума тытăннă, обозоремонтнăй мастерской организациленĕ. Вăл 150 стан тукун туса кăларнă, халĕ урапа кустăрмисем туса кăлараççĕ. Çавăн пекех халь ку районра тăмран тĕрлĕрен чашăксем, савăт-сапасем туса кăларасси сарăлса пырать.

Канашра та райсовет исполкомĕ пуçарнă тăрăх, тăмран савăт-сапасем туса кăларакан, тир-сăран тумалли мастерской организациленĕ пуçăннă. «Иккĕмĕш пятилетка» тата Крупская ячĕпе тăракан колхозсенче кирпĕч тата черепица производствисене организациленĕ.

Иртнĕ çулсенче Канаш районĕ кашăксене урăх вырăнтан кӳрсе тăнă. Сталин ячĕпе тăракан артельте кашăксем тăвакан цех организациленĕ. Пĕрремĕш кварталта 12 пин тенкĕлĕх кашăк туса кăларнă. Халĕ районра кашăксем çителĕклĕ, вĕсене урăх вырăнтан кӳрсе килмеççĕ. Районри артельсем колхозсем валли те çуна тукунĕсемпе урапа кустăрмисене çителĕклех туса кăлараççĕ.

Калас пулать, хăшпĕр районсенчи организацисемпе вырăнти Советсем партипе правительство вырăнти чĕртаварта куллен кирлĕ таварсем туса кăларасси çинчен йышăннă решенине пурнăçлас тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлемеççĕ. Чылай çĕрти вырăнти Советсем ку тĕлĕшпе хăйсен пуçарулăхне кăтартмаççĕ. Хăшпĕр районсенче куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви туса кăларас пирки пысăк «плансем» çырнишех лăпланса лараççĕ, район условийĕсене, унăн экономикине кирлĕ пек тĕпчесе вĕренмеççĕ. Вĕсем партипе правительствăн постановленине конкретлă ĕçпе пурнăçлас тĕлĕшпе «кăтартусем» кĕтеççĕ, такам вĕсем патне пырса ĕçе организацилесси çине шанаççĕ. Вăрнар райсовет исполкомĕ вырăнти промышленноçа çителĕксĕр ертсе пырать. Куллен кирлĕ таварсем туса кăларас ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе ку вăхăтченех нимĕн те туман, çĕнĕрен производствăсем организацилемен. Малтанхи артельсем начар ĕçлеççĕ, хăйсен планĕсене тултараймаççĕ. Райсовет исполкомĕн председателĕ Гаврилов юлташ: эпир проектсемпе сметăсем тума пĕлместпĕр, унсăрăн çĕнĕ производство организацилеме укçа паманнăçĕ, тесе лăпланса ларнă. Ахальтен мар ĕнтĕ Вăрнар районĕнче иртнĕ çулта тума тытăннă кирпĕч заводне халĕ те туса çитереймеççĕ. Артельсем туса кăларакан продукцисен пахалăхĕ начар, хакĕ хаклă.

Канаш районĕнчи вырăнти Советсем куллен кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе хăшпĕр ĕçсене тунă пулин те, район условинчи пуянлăхсемпе туллин усă курассишĕн çителĕклĕ кĕрешмеççĕ. Çатăркă, Сухайкасси ялĕсем патĕнче известь, шурă тăм нумай. Анчах вĕсемпе усă курасси çинчен никам та шарламасть. Вырăнти Советсем предприятисемпе артельсем туса кăларакан куллен кирлĕ таварсен пахалăхĕ çине çавăрăнса пăхмаççĕ. Канашри вагонсем юсакан завод ухватсем туса кăларма тытăннă. Анчах ку ухватсем хуçалăхра усă курма çаврăнăçусăр: йывăр, тирпейсĕр. Çавăнпа вĕсем магазинсенче сутăнмасăр выртаççĕ. Сĕтел-пукансем туса кăларакан фабрикăн диванĕсем урăх вырăнтан кӳрсе килнĕ дивансенчен те хаклăрах.

Партипе правительствăн постановленийĕнче вырăнти промышленноçа сарса пырас тата куллен кирлĕ таварсем туса кăларас ĕçĕн ăнăçлăхĕ вырăнсенчи партипе совет организацисен руководителĕсен, вырăнти промышленноçпа промкоопераци работникĕсен пуçарăвĕнчен тата вĕсем çине тăрса, пикенсе ĕçленинчен килнине кăтартса панă. Калас пулать, çав пуçарулăх тата çине тăрса, пикенсе ĕçлени советорганĕсенче курăнмасть-ха. Вырăнти Советсем партипе правительство постановленине сӳтсе-явнипе тата плансем, çавнашкалах мероприятисем палăртнипе çеç лăпланса ларнă. Вĕсем плансене, мероприятисене çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пыма пуçăнман.

Райсовет исполкомĕсем тата районсенчи промкомбинатсем, хăйсен районсенче куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви туса кăларассишĕн ответлă пулса, партипе правительствăн постановленине большевикла пурнăçламалла. Пуш сăмах çапса вĕçĕмсĕр плансем çырасси вырăнне куллен кирлĕ таварсене массăллăн туса кăларасси çине куçмалла, вырăнти промышленноçпа промкооперацине конкретлă ертсе пымалла, ĕçре конкретлă пулăшу памалла. Халичченхи производствăсене татах аслăлатса, çĕнĕ предприятисен строительствисене анлăн сарса пымалла.

Пирĕн республикăра халичченхи производствăсене аслăлатас тата çĕнĕ производствăсен строительствине тăвас ĕçсем çителĕксĕр пулса пыраççĕ. Районсенче государство паракан ссудăсене илмесĕр тăраççĕ, ссудăпа усă курмаççĕ. Пĕр Çĕмĕрле районĕнче кăна 329 пин тенкĕ ссуда илнĕ, ытти районсем ку тĕлĕшпе васкамаççĕ-ха.

Вырăнти промышленноçа, çавнашкалах продовольствин вырăнти базине аталантарса пырасси кадрсенчен килет. Вырăнти Советсен предприятисене, мастерскойсене тата артельсене пултарулăх кадрсемпе çирĕплетмелле. Кадрсене партипе правительствăн постановленине пурнăçа кĕртме пулăшмалла. Кашни предприяти, мастерской тата артель хăйĕн куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли планне кашни кун тултартса пытăр, çирĕп график тăрăх ĕçлетĕр.

Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ Маленков юлташ докладĕ тăрăх йышăннă резолюцире: «предприятисен ĕçĕнчи плансăрлăха, продукцине пĕр пек мар кăларса тăрассине пĕтерес пулать» тенĕ. Кашни предприятин, мастерскойăн тата артелĕн производствăллă плака малтанах туса хатĕрленĕ график тăрăх кунсерен тултарса пымалла. Çирĕп планлăх, тĕрĕс учет. кашни цех кашни кунхи плана тултарассишĕн кĕрешесси—куллен кирлĕ таварсем туса кăларакан предприятисемпе мастерскойсен тивĕçлĕ ĕçĕ.

Вырăнти Советсен промышленноçа аталантармалли плана мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслемелле. Вырăнти ресурссемпе усă курас ĕçри чăрмавсене тата йывăрлăхсене çийĕнчех палăртса, вĕсене хăвăрт пĕтерме пулăшмалла.

Юлашкинчен Чăваш АССР Вырăнти промышленность халăх комиссариачĕ çинчен пĕр-ик сăмах. Вăл партипе правительство постановленине пурнăçа кĕртсе пырас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Кунта вырăнсенче ĕçсем мĕнле пулса пынине, çĕнĕрен производствăсем организацилемине тата куллен кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе мĕнле йывăрлăхсемпе чăрмавсем пурринне, çавнашкалах уйăрăм районсене мĕнле пулăшу памаллине пĕлмеççĕ.

Вырăнти чĕртаварта куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви туса кăларассине ӳстермелли мероприятисем çинчен партипе правительство йышăннă постановлени ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн сталинла тăрăшине кăтартса парать. Çав постановленине вăхăтрах тата пĕтĕмпех пурнăçа кĕртсе пырасси—вырăнти Советсен, партипе хуçалăхлă организацисен хисеплĕ ĕçĕ. Сталин юлташ «Сахалтарах калаçăр, ытларах ĕçлĕр—вара сирĕн ĕç тухатех» тенине асра тытса, партипе правительство куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине ӳстересси çинчен йышăннă постановленине чăн-чăн практикăллă ĕçпе пурнăçламалла.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН V СЕССИЙĔ УÇĂЛАССИ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР Верховный Совечĕн V Сессийĕ Шупашкар хулинче 1941 çулти апрелĕн 14-мĕшĕнче каçхине 7 сехетре Советсен çурчĕн залĕнче уçăлать.

Механизациллĕ эрех завочĕн строительстви

Ура-Тюбере (Ленинабад облаçĕ) механизациллĕ пысăк эрех завочĕ лартаççĕ. Çав завод çултăлăкра 12 сортлă эрехсем 5 миллион литр туса кăлараканпулать.

ССР СОЮЗĔН СОВНАРКОМĔПЕ ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕТĔНЧЕ

Юбилейсене уявламалли йĕркене çинчен

Юлашки çулсенче тĕрлĕ организацисен, учрежденисен, предприятисен, обществăсен, научнăй институтсен, вĕренӳ заведенийĕсен тата уйăрăм çынсен тĕрлĕ йышши юбилейĕсене уявлас юрăхсăр практика анлăн сарăлса кайнă. Юбилея мĕнле датăра тăвас тенĕ çавăн чух тăваççĕ. Пĕр-пĕр организаци, предприяти, учреждени ĕçлеме пуçланăранпа виçĕ çул, пилĕк çул, вунă çул, вунпилĕк çул, çирĕм çул тултарнине уявлаççĕ. Уйăрăм çынсен юбилейĕсене те мĕнле датăра тăвас тенĕ çавăн чух тата ун тĕрлĕ йышши сăлтавсемпе — пĕр-пĕр предприятире, учрежденире ĕçлеме пуçланă вăхăт тăрăх, пĕр-пĕр специальноçпа ĕçлеме пуçланă вăхăт тăрăх, миçе çул тултаçни тăрăх тăваççĕ. Юбилейсене час-часах юбилярсен ĕçĕнчи çитĕнӳсене шута илмесĕр уявлаççĕ, çакна пула рара юбилейла вакханали пулса тăрать. Юбилейсене правительствăн тивĕçлĕ органĕсенчен ирĕк ыйтса илмесĕрех ирттереççĕ, вĕсене ирттернĕ çĕрте государствăпа обществăн чылаях пысăк средстависене пĕтереççĕ, тата кашни расрах юбилярсене орденсемпе тата медальсемпе наградăлама ыйтаççĕ.

Предприятисен, учрежденисен, организацисен тата уйăрăм çынсен государство умĕнчи уйăрăмах пысăк тава тивĕçлĕ ĕçĕсене партипе правительство государство наградисемпе тата хавхалантармалли ытти мерăсемпе палăртнă тунине шута илсе, юбилейсене уявлас ĕçе йĕркелесе ярас шутпа, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çапла йышăннă:

1. Тĕрлĕрен организацисен, учрежденисен, предприятисен, обществăсен, научнăй институтсен тата вĕренӳ заведенийĕсен юбилейĕсене, юбилярсен ĕçĕнче питех те пысăк çитĕнӳсем пур пулсан, вĕсем ĕçлеме пуçланăранпа çирĕм çул, аллă çул, çĕр çул тултарнă кунсенче тата малалла аллăшар çул урлă ирттермелле.

2. Государствăпа обществăллă ĕçри пысăк та паллă деятельсен, çавăн пекех ученăйсен тата наукăпа техникăна, литературăпа искусствăна аталантарса вăйлатас ĕçре уйăрăмах пысăк тава тивĕçлĕ ĕçсем тунă ытти çынсен юбилейĕсене вĕсем çуралнăранпа аллă çул, утмăл çул тата çитмĕлпилĕк çул тултарнă май кăна паллă тумалла.

3. Хăйсен государствăллă калама çук пысăк ĕçĕсемпе, хăйсем наука, техника, литература тата искусство ĕçĕнче тунă открытисемпе тата çитĕнӳсемпе тăван çĕршыва чапа кăларнă аслă çынсене асăнса чыслассине вĕсем вилнĕренпе 25, 50, 75, 100, 150, 200 çул тултарнă кунсене май тата малалла кашни çĕр çул урлă паллă тумалла.

4. Юбилейсене организацилессине тата вĕсене ирттерме средствăсем расходлассине СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ ирĕк панă тăрăх кăна тума юрать.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Ф. А. Артемьев юлташа Чăваш АССР Совнаркомĕн Председатель Заместителĕн обязанноçĕсенчен хăтарасси çинчен

Филипп Артемьевич Артемьев юлташа, вăл урăх ĕçе куçнă май, Чăваш АССР Совнаркомĕн Председатель Заместителĕн обязанноçĕсенчен хăтарас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ Г. ГУСЕВ.

Шупашкар хули, 1941 çулти апрелĕн 9-мĕш.

ССР Союзĕпе Норвеги хушшинче таварçаврăнăшпе тӳлевсем çинчен тунă килĕшӳ

1941 çулти апрелĕн 10-мĕшĕнче Мускавра ССР Союзĕпе Норвеги хушшинче таварçаврăнăшпе тӳлевсем çинчен Килĕшӳ тунă.

Килĕшӳве калаçусем ирттернĕ хыççăн тунă. Калаçусене çаксем ирттернĕ: пĕр енчен—ССР Союзĕн Тулашри Суту-илӳ Халăх Комиссарĕн Заместителĕ М. С. Степанов юлташ тата СССР Наркомвнешторгĕн суту-илӳ договорĕсен отделĕн начальникĕ Д. Д. Мишустин юлташ, тата тепĕр енчен—Германин Мускаври Посольствин Советникĕ господин Гильгер тата Норвегири суту-илӳ, промышленность, ремесласем тата пулă тытас ĕçсен министрĕн обязанноçĕсене туса тăракан г-н Иоганнессен.

(ТАСС).

Çамрăк специалистсем производствăна каяççĕ

Кăçалхи çулăн пĕрремĕш кварталĕнче 10 пин çынна яхăн çамрăк специалистсем аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă. Вĕренсе тухнисем—промышленность инженерĕсем, агрономсем, ялхуçалăх механизаторĕсем—пурте пекех Уралти, Донбасри, Вăтам Азири республикăсенчи, союзлă çĕнĕ республикăсенчи, Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи предприятисене, колхозсене тата совхозсене кайнă.

Иккĕмĕш кварталта аслă шкулсенчен 75 пин çынна яхăн—пуринчен ытларах педагогсем, врачсем, инженерсем вĕренсе тухаççĕ. Çак специалистсем те тӳрех учрежденисене ĕçлеме каяççĕ.

ПЛАНА КУНРАН-КУН ТУЛТАРСА ПЫМАЛЛА, ÇИРĔП ГРАФИК ТĂРĂХ ĔÇЛЕМЕЛЛЕ

Кая юлса пыракан предприятисем пулмалла мар

Пирĕн республикăри вырăнти промышленность пĕрремĕш кварталти плана 93 процент кăна тултарчĕ. Уйăмăнах область промышленноçĕн предприятийĕсем начар ĕçлерĕç. Сăмахран, Çĕрпӳри примус горелкисем тăвакан завод ĕçĕсем кăçал та, иртнĕ çулти пекех, питĕ япăх. Вăл пĕрремĕш кварталти плана 8 процент кăна тултарнă.

Çакна палăртса хăвармалла: пĕрремĕш кварталта районри промышленность предприятийĕсен ĕçĕсем чылаях лайăхланчĕç темелле, вĕсем плана 102,8 процент тултарчĕç. Анчах вырăнти промышленность предприятийĕсен пĕтĕм ĕçне илсе пăхсан, вĕсен ĕçри показателĕсем начар. Пĕтĕмпе 36 предприяти, вĕсенчен пĕрремĕш кварталти плана 16 предприяти кăна тултарнă: вăл шутран районри предприятисем 14, республикăри организацисене пăхăнса тăраканнисенчен 2 предприяти.

Шупашкарти тата Сĕнтĕрвăрринчи çĕвĕ çĕлекекен мастерскойсем малта пыраççĕ. Вĕсем кварталти плана ытлашшипех — 200 процент тултарчĕç. Канашри уйăрăм заказсем тăрăх çĕвĕ çĕлекен мастерской квартал тăршшипех йĕркеллĕн ĕçлесе пычĕ. Вăл, программăна кунран-кун пурнăçа кĕртсе пырса, кварталти плана 123 процент ытла тултарчĕ. Çаван пекех Шăмăршăри райпромкомбинат, Сĕнтĕрвăрринчи катка-пичке тата урапа-çуна тăвакан завод производствăллă программăна ытлашшипех тултарчĕç.

Калас пулать, пĕрремĕш кварталта Сĕнтĕрвăрри районĕнчи вырăнти промышленность предприятийĕсем начар мар ĕçлерĕç. Пĕтĕм районĕпе илсен, кунти предприятисем плана 155 процент, Çĕмĕрле районĕнчи предприятисем 123 процент тултарчĕç. Уйăрăм районсенчи предприятисем пачах çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Етĕрнепе Куславкка районĕсенче çĕвĕ çĕлекен мастерскойсем çеç плана тултарнă, ытти предприятисем кая юлнă. Сăмахран, Куславккари кӳршек-чӳлмек тăвакан мастерской кварталти плана 13 процент кăна тултарнă.

Первомайски районра та ĕçсем чаплах мар. Ку районри урапа-çуна тăвакан мастерскойпа хăма завочĕ кварталти плансене тултараймарĕç, пĕри — 88 процент, тепри — 51 процент кăна тултарчĕç.

Вырăнти промышленность предприятийĕсен плана кунран-кун, уйăхран-уйăха тултарса пыма, условисем çителĕклĕ пулнă, анчах вĕсемпе усă курма пĕлменни пĕтĕм ĕçе чăрмантарса тăрать. Хăшпĕр предприятисен руководителĕсем хăйсем йĕркеллĕн ĕçлесе пыма пĕлменнине кăçал та, пĕлтĕхи пекех, чĕртавар çук тесе тӳрре кăларма пăхаççĕ. Чăн та, иртнĕ çулта чĕртавар пулманни, ăна вăхăтра хатĕрлесе паманни нумай чăрмавсем кӳнĕ, анчах предприяти руководителĕсем çав çитменлĕхсенчен кăçал та хăйсене тивĕçлĕ выводсем туман. Çавăнпа та пĕрремĕш кварталти планпа палăртнă чылай изделисене тумаççĕ, çĕнĕ производствăсем уçас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ, плана пур ассортиментсем тăрăх та тултараймаççĕ.

Вырăнти промышленность предприятийĕсенче партин XVIII конференцийĕ йышăннă решенисене пурнăçа большевикла кĕртсе пырассишĕн çителĕксĕр кĕрешеççĕ. Предприятисен ĕçне çĕнетсе лайăхлатас тĕлĕшпе халĕ те пысăк улшăнусем пулса иртмеççĕ. Пĕтĕм ĕçе оперативлăн ертсе пырассишĕн, производствăра йĕркелĕх, тасалăх тăвассишĕн большевикла тăрăшни çук.

Чылай предприятисем графиксăр ĕçлеççĕ. Çавăнпа та цехсем, бригадăсем, мастерскойсем хăйсен планĕсене куллен-кун тултарса пыраймаççĕ. Паллах, плана кашни кун, кашни мастерскойпа цех, кашни бригада тата кашни рабочи тултарса пыраймасан, производствăллă программăна хисеп енчен те, пахалăх енчен те, ассортиментсем тăрăх та пурнăçа кĕртме май çук. Кашни предприятин талăклăх çирĕп график пулмалла, çав график тăрăх ĕçлесе пымалла.

П. ЦАПЛИН.

Пысăк активлăхпе иртрĕ

ИШЛЕЙ. (Телефон тăрăх). Апрелĕн 10-мĕшĕнче Ишлей районĕн финанс отделĕнчи пуçламĕш парторганизацинче отчетпа суйлав пухăвĕ активлăн иртрĕ. Пухăва 9 коммунист пынă, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ И. Осипов юлташăн отчетлă докладĕ тăрăх пренире 7 çын тухса каларĕç.

Парторганизацинче лайăх ĕçлекен, беспартийнăйсемшĕн примерлă пулса тăракан коммунистсем сахал мар. Налог агенчĕсем Миронов тата Васильев юлташсем партипе правительство решенийĕсене пурнăçлассишĕн коммунистсен мĕнле кĕрешмеллине кăтартса параççĕ. Вĕсем 1941 çулти пĕрремĕш кварталти финанс планне 139 процент тултарнă.

Парторганизаци служащисем хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕçе куллен туса пырать. Коммунистсенчен нумайĕшĕ хăйсен пĕлӳне ӳстерес тĕллĕпе çине тăрса ĕçлеççĕ.

Çамрăк коммунистсем хушшинчи ĕç çителĕксĕр тăнине, коммунистсене партиллĕ поручениесем парсан, вĕсене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесе тăманнине пренире уйăрăмах палăртрĕç.

Пуху парторганизаци ĕçне çителĕклĕ тесе йышăнчĕ, секретаре И. Осипов юлташах суйласа хăварчĕ.

Д. МИХАЙЛОВА.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

5.308.000 гектар çуртыррине акнă

Апрель пуçламĕшĕнче кăнтăр енче ăшă, хĕвеллĕ çанталăк тăни уйăхир ĕçĕсем фронтне чылай анлăлатнă.

Апрелĕн 5-мĕш тĕлне çĕршыври колхозсемпе совхозсенче çурхи культурăсене 5.308.000 гектар—пĕлтĕр çак вăхăт тĕлне пулнинчен 2.495.000 гектар нумайрах акнă. Апрелĕн пĕрремĕш пилĕккунлăхĕнче çурхи культурăсене Киев, Винница, Ворошиловград, Днепропетровск, Житомир, Каменец-Подольск, Кировоград тата Сталино облаçĕсем акма пуçланă. Кăнтăрти облаçсенчи нумай районсем иртерех акăнакан культурăсене акса пĕтернĕ тата каярах юлса акмалли культурăсене акма тытăннă. Крым АССР Республикипе Грузин ÇС Республикинчи колхозсем хĕвелçаврăнăш акмалли плана ирттерсе тултарнă. Çак культурăна Дагестан АССР Республикинче те акса пĕтернĕ. Краснодар крайĕпе Молдаван ÇС Республикинче сахăр кăшманĕ акма пуçланă.

Вăтам Ази республикисенче тата Азербайджан ÇС Республикинче хлопчатник акас ĕç ăнăçлăн сарăлса пырать. (ТАСС).

Çамрăк специалистсем производствăна каяççĕ

Кăçалхи çулăн пĕрремĕш кварталĕнче 10 пин çынна яхăн çамрăк специалистсем аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă. Вĕренсе тухнисем—промышленность инженерĕсем, агрономсем, ялхуçалăх механизаторĕсем—пурте пекех Уралти, Донбасри, Вăтам Азири республикăсенчи, союзлă çĕнĕ республикăсенчи, Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи предприятисене, колхозсене тата совхозсене кайнă.

Иккĕмĕш кварталта аслă шкулсенчен 75 пин çынна яхăн—пуринчен ытларах педагогсем, врачсем, инженерсем вĕренсе тухаççĕ. Çак специалистсем те тӳрех учрежденисене ĕçлеме каяççĕ.

А. М. Горький музейĕ

Вырăссен аслă писателĕ Алексей Максимович Горький çамрăк чухне Хусанта чылай вăхăт хушши пурăннă. Вăл хăйĕн Хусанти пурнăçне «Мои университеты» ятлă чаплă произведенире питех те лайăх кăтартса панă.

Пулас аслă писатель 55 çул каярах (1886—87 ç. ç) Хусанта Деренков булочнăйĕнче пекарь ученикĕ пулса ĕçленĕ. Историне ĕмĕрлĕхех кĕрсе юлнă çав пысăк мар çурт Галактионовски урамра халĕ те çав-çавах ларать. Иртнĕ çулти март уйăхĕнче вăл çуртра Алексей Максимович Горький музейĕ уçăлчĕ.

Музей организаторĕсем умне хисеплĕ задача — çамрăк Алеша Пешковăн чăнчăн сăн-сăпатне, пулас аслă писателĕн çамрăк чĕрине пуянлатнă впечатленисем ăçтан çуралса тухнине кăтартса парас задача тăнă. Ку тĕлĕшпе Хусанти центральнăй музейăн научнăй сотрудникĕ Калинин юлташ нумай тăрăшса ĕçленĕ. Алексей Максимович Хусанта тĕлпулса калаçнă нумайĕш çынсен фотографийĕсем, çав вăхăтсене кăтартса паракан документсем, авалхи Хусанăн, писатель пурăннă е çӳренĕ вырăнсен ӳкерчĕкĕсем — çаксене пĕтĕмпех музейра йĕркеллĕн вырнаçтарнă.

Çултăлăк хушшинче музейра çĕнĕ экспонатсем чылай хутшăннă. Тутарсен скульпторĕ С. Ахун Алексей Максимович скульптурине туса панă, художник Сокольский пысăк портрет çырса панă. Тутар республикин научнăй библиотекинчен музей Добролюбов, Писарев, Гоголь тата Достоевский произведенийĕсен кивĕ изданийĕсене илнĕ, çав писательсен творчествине Горький чи малтан Хусанта паллашнă.

Нумаях пулмасть Алексей Максимович арăмĕ — Екатерина Павловна Пешкова музей валли аслă писателĕн 1902—03 çулсенче тунă икĕ фотографиллĕ портретне панă.

Паллă ĕнтĕ, Деренковăн иккĕмĕш бакалейнăй лавкинче студентсен вăрттăн пухăвĕсем пулнă тата халăх хушшине кăларма чарнă кĕнекесем вуланă. Вăл сходкăсенче çамрăк Горький те пулнă. Кăçал музейра çав лавкан макетне туса лартаççĕ. Кунсăр пуçне тата Алексей Максимовичăн ача чухнехи пурнăçне кăтартакан çĕнĕ раздел хатĕрленме тытăннă.

Музейăн пĕр пысăк пӳлĕмĕнче аудитори пулать, унта аслă писателĕн пурнăçĕ, творчестви тата уйăрăм произведенийĕсем çинчен лекцисем вуламалла.

Пĕр çултăлăк хушшинче А. М. Горькийĕн Хусанти музейне Совет Союзĕн тĕрлĕ кĕтесĕсенчен 10 пин çынна яхăн килсе курнă.

В. И. Ленин сочиненийĕсен тăваттăмĕш изданийĕн пĕрремĕш томне подписчиксене ярса пама тытăнаççĕ

Çывăхри кунсенчех Мускавра В. И. Ленин сочиненийĕсен тăваттăмĕш изданийĕн пĕрремĕш томне подписчиксене пама тытăнаççĕ. Çĕршывăн инçетри крайĕсемпе облаçĕсенчи подписчиксем те кĕнекесене ССР Союзĕн центральнăй облаçĕсенчи подписчиксемпе пĕр вăхăталлах илеççĕ. Издани томĕсене инçетри пунктсене пирвайхи черетпе ярса параççĕ.

Государство издательствисен кĕнекепе суту-илӳ тăвакан пĕрлешĕвĕ (КОГИЗ) кĕнекесене подписчиксене парас тĕлĕшпе ĕçлекен çĕнĕ пунктсем 235 пункт организацилет. Подписчик пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса кайнă пулсан, вăл черетлĕ томсене çĕнĕ вырăнта илме пултарать, анчах унăн çакăн çинчен подписка илнĕ кĕнеке магазинне вăхăтра пĕлтерес пулать.

Запорожье хулине реконструкцилеççĕ

Запорожье хулине тĕпрснех реконструкцилемелли плана ĕçре пурнăçа кĕртме пуçланă. Днепр çыранĕнче нумай хутлă çуртсен çĕнĕ кварталĕсен строительстви сарăлса кайнă. Хулан пулас центрне 6 миллион тенкĕ тăракан культура дворецĕ илемлетсе лармалла пулать. Днепрогэс плотини патĕнче металлургсен питех те пысăк Культура çуртне туса лартаççĕ.

Хулан кивĕ пайĕпе çĕнĕ пайне анлă, 11 километрлă проспект пĕрлештерсе тăрать. Хортица утравĕ çинче нумай санаторисем тата канмалли çуртсем пулаççĕ. Запорожье хулине çĕнĕ парксем илемлетсе тăмалла пулаççĕ.

Шполянскри апат-çимĕç комбиначĕ

Шполянск районĕнчи потребительсем (Киев облаçĕ) вырăнта туса кăларнă таварсемпе анлăн усă кураççĕ. Районри магазинсенче сутакан пĕтĕм апат-çимĕç продукчĕсенчен виççĕмĕш пайне яхăн çур çул маларах кăна ĕçе янă комбинат туса кăларать.

Елĕкрех кивелсе кайнă сарайсем ларнă вырăнсенче, халĕ комбинатăн колбаса, кондитерски изделисем, çăкăр тата булка, тутлă шывсем тата каткапичкесем туса кăларакан цехсем лараççĕ. Пулă ĕрчетмелли пĕвене йĕркене кĕртеççĕ. Çав пĕвере кăçал 9 тоннăран кая мар зеркальнăй карп тытма шутлаççĕ. Çу çапакан завод строительстви вĕçленсе пырать, вăл çултăлăк вĕçне 600 тонна çу çапса кăларма пуçлать. Тĕрлĕ йышши колбасасемпе тата ытти çимĕççемпе пĕр чарăнмасăр суту-илӳ тăвас шутпа, ситес вăхăтрах комбинат майракалла шултра выльăхсене 200 пуçа яхăн самăртма тытăнать. Катка-пичке тăвакан цех çимĕçсене тăварламалли сезон çитичен çĕр витре кĕрекен пичкесем 800 штука ытла туса хатĕрлет.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Конкретлă сĕнӳсем пачĕç

Аччари (Канаш р.) территориллĕ парторганизацинче отчетпа суйлав пухăвĕ апрелĕн 10-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре уçăлмалла. Коммунистсем 6 сехетчен кĕтсе тăман, вĕсем 30 минут малтан пухăнă.

Территориллĕ парторганизаци секретарĕн ĕçĕсем çинчен Данилов юлташ отчет туса пачĕ. Вăл пĕр сехет çурă калаплĕ. Коммунистсем парторганизаци секретарĕн отчетне тимлĕн итлесçĕ. Докладра парторганизаци колхозсене, ялсоветне, культпросвет учрежденийĕсене мĕнле пулăшни, коммунистсен производствăри авангардлă рольне ӳстерессишĕн мĕнле тăрăшни уçăн курăнса тăрать.

Территориллĕ парторганизацинче «Красная Армия», Куйбышев ячĕпе тăракан тата «Чуваш ЦИК» колхозсенчи коммунистсем тăраççĕ. Çак колхозсем парторганизаци пулăшса тата ертсе пынипе обществăллă хуçалăха тĕрекле-тес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тунă. 1940 çулăн пуçламĕшĕнче виçĕ колхозра 8 ферма пулнă пулсан, халĕ 14 ферма. Чăх-чĕп фермисемĕр пуçне ытти фермăсенче выльăхсем планпа пăхнă чухлĕ пур. Пахча-çимĕç ӳстерсе «Красная Армия» колхоз 127 пин тенкĕ, Куйбышев ячĕпе тăракан колхоз 135 пин тенкĕ таса тупăш илнĕ.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри конференцин решенийĕсем, ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ Чăваш республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хусса тӳлесси çинчен йышăннă постановлени çинчен колхозниксене ăнлантарса пани вĕсен активлăхне çĕклерĕ. Халĕ колхозсем çуракине хатĕрленсе çитнĕ, фермăсенче, складсенче тасалăх, йĕркелĕх тунă.

Нумай коммунистсем хăйсен ĕçĕсене лайăх туса пыраççĕ. Коммунист Петров юлташ ялсовет исполком председателĕнче ĕçлет. Ялсовет 1940 çултанпа лайăх ĕçлесе пырать, финансо планне квартал-тан-квартал тултарать. Ялсовет депутачĕсене практикăллă ĕçе хутшăнтарать.

Пренире тухса калакансем колхозсен тата парторганизаци ĕçĕнчи çитменлĕхсене критиклерĕç, единоличниксене колхоза явăçтарас тĕлĕшпе начар ĕçленине палăртрĕç.

Парторганизаци коммунистсен пĕлӳне ӳстерес, комсомол организацисен ĕçĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе те сахал ĕçленĕ.

Петров юлташ хăйĕн сăмахĕнче юлашки вăхăтра политикăллă агитапи вăйсăрланнине палăртать. Агитаторсен семинарĕсем пулмаççĕ, çакна пула агитаторсем халăх хушшинче докладсем, калаçусем туса ирттерме нимĕн хатĕрленмесĕр каяççĕ.

Михайлов коммунист ялсоветăн культура тĕлĕшĕпе ĕçлекен яланлăх комиссине ертсе пырать. Анчах та вăл хăйĕн ĕçне çителĕксĕр тăвать. Вулав çурчĕ тата библиотека йĕркеллĕ ĕçлемеççĕ.

ВКП(б) кандидачĕ Федоров юлташ парторганизацин малашнехи задачисене тĕплĕн кăтартса пачĕ. Коммунистсен колхоз экономикине тĕплĕн пĕлсе ертсе пыма кирлине палăртрĕ.

Пуху коммунистсем активлă пулнипе, парторганизаци руководителĕн ĕçне тĕплĕн сӳтсе-явнипе, малашнехи ĕçсене лайăхлатма конкретлă сĕнӳсем панипе иртрĕ. Секретарь отчетне тĕплĕн сӳтсе-явнă хыççăн, пуху пуçламĕш парторганизаци секретарьне Данилов юлташа суйларĕ.

М. ТИТОВ.

(Хамăр корр.).

Парти Обкомĕн пленумĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн

Партин Тăвай райкомĕн çак кунсенче пулса иртнĕ пленумĕ ВКП(б) Обкомĕн VI-мĕш пленумĕн итогĕсене сӳтсе-явăрĕ. Пленум партипе правительство куллен кирлĕ таварсем туса кăларасси çинчен йышăннă постановлението районра çителĕксĕр пурнăçа кĕртсе пынине палăртрĕ. Предприятисемпе артельсем йĕркеллĕ ĕçлеймеççĕ, вĕсем пĕрремĕш кварталти плансене тултараймарĕç.

Çĕнĕ производствăсем организацилесси районра уйрăмăнах начар тăрать. Иртнĕ çулта тума тытăннă черепица заводне кăçалхи март уйăхĕнче туса çитерсе, ĕçлеттермелле пулнă. Анчах туса çитереймен.

Тăрмăшри Ворошилов ячĕпе тăракан артелĕн йывăç кĕреçесем, йĕлтĕрсем, çуртйĕр тăррисене витмелли турпассем туса кăлармалла пулнă пулсан, çак производствăсене организапилемен.

Райсовет исполкомĕ вырăнти промышленноçа, куллен кирлĕ таварсем туса кăларас ĕçе çителĕксĕр ертсе пырать. Куллен кирлĕ таварсем туса кăларакан мастерскойсенче çĕнĕ цехсем организацилеме тăрăшман.

Парти райкомĕн пленумĕ куллен кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе татăклă улшăну тума, партипе правительствăн постановлението тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыма хушса, решени йышăнчĕ.

М. РАЗНОМАЗОВ.

Отчетпа суйлава хатĕрленнĕ май

Чăвашкоопинсоюзри пуçламĕш парторганизацин отчетпа суйлав пухăвĕ апрелĕн 22-мĕшĕнче пулса иртмелле. Халĕ парторганизаци парторгăнсен суйлавне хĕрӳллĕн хатĕрленет.

— Пирĕн пуçламĕш парторганизаци Коопинсоюзри, страхкассăри тата икĕ артельти коммунистсене пĕрлештерсе тăрать. Суйлава хатĕрленнĕ май, эпир тăватă учреждени ĕçĕсемпе тĕплĕн паллашма палăртнă. Çавна май кашни коммуниста уйрăм поручениесем панă, — тесе каласа парать парторганизации секретарĕ Колбасов юлташ.

Коммунистсем хăйсене панă поручениесене пурнăçлама тытăннă. ВКП(б) членĕ Мальцев юлташ коммунистсем парти историне мĕнле вĕренсе пынине, Платонов юлташ «Красный молот» артельти комсомол пуçламĕш организацийĕн ĕçĕсемпе паллашать. Комсомол организацийĕн ĕçне тĕрĕслени çакна кăтартса пачĕ: комсомол организацийĕ производство ыйтăвĕсемпе сахал интересленет, производствăра комсомолецсем те пример кăтартмаççĕ. Пуçламĕш организацин секретарĕ Кирпичников юлташ хăйĕн производствăллă планне тултараймасть. Вăл март уйăхĕнчи плана 85 процент çеç тултарнă. Çав вăхăтрах ытти рабочисем нормăна 200 процент таран тултарса ĕçлеççĕ.

Курманин юлташ производство ĕçне XVIII партконференци решенийĕсем тăрăх урăхлатса çĕнетнине тĕрĕслет. Партконференци хыççăн артельсем хăйсен планĕсене тултарас тĕлĕшпе лайăхрах ĕçлеме тытăнчĕç, графика кунсерен тултарса пыраççĕ. «Красный молот» артель пĕрремĕш квартал планне 117 процент ытларах тултарнă. Артельте ĕçлекен 54 сыпран 13 стахановец, 22 ударник шутланаççĕ.

В. С.

Секретарь отчет тума тĕплĕн хатĕрленмен

Отчетпа суйлав пухăвĕ каçхине 8 сехетре уçăлмалла. Палăртнă вăхăт тĕлне парторганизацинчи коммунистсем пурте пухăннă. Пĕр коммунист кăна 3 минут кая юлнă. Отчетпа суйлав пухăвĕ палăртнă вăхăтра ĕçе тытăнчĕ.

Радиокомитетри пуçламĕш парторганизацин секретарĕ Сарро юлташ хăйĕн çулталăкри ĕçĕсем çинчен коммунистсем умĕнче отчет туса парать. Вăл радио ĕççыннисене коммунистла воспитани парас ĕçре мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен каланă хыççăн, парторганизаци çулталăк хушшинче тунă ĕçсем çинче чарăнса тăрать.

Докладчик сăмахĕнчен парторганизаци ĕçĕнче çитĕнӳсемпе çитменлĕхсем те пурри курăнать. Отчетлă тапхăрта партие илес ĕçре çитменлĕхсем пулнă. Пуçламĕш организаци партие илнĕ юлташсене ВКП(б) горкомĕ çирĕплетмен. Анчах та Сарро юлташ пуçламĕш парторганизаци партие илес ĕçре тунă йăнăшсен сăлтавне уçса памарĕ.

Коммунистсене воспитани парасси, çамрăк коммунистсем хушшинче ĕçлесси çинчен сăмах тапратсан, коммунистсем «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн» хăш главине вĕренчине список тăрăх вуласа пачĕ докладчик. Кашни коммунист большевизма мĕнле вĕренине тĕплĕн сутатса памарĕ. Анчах докладчика ку тĕлĕшпе коммунистсем пулăшрĕç. «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренекенсемпе юлташла калаçусем туса ирттернĕ-и?» тесе ыйтрĕç вĕсем.

— Пĕрре юлташла калаçу туса ирттернĕ,—тарĕ докладчик.

Парторганизацинче парти кандидачĕсем 8 сын пулсан, пиллĕкĕшĕн кандидат стажĕ тахçанах иртсе кайнă. Парторганизаци кандидатсем хушшинче сахал ĕçленĕ, вĕсене партин членĕсем пулма тивĕçлипе пулăшман.

— Халĕ манăн производствăра ĕçсем нумай-ха, çавсене туса пĕтерсен, «Кĕске курса» тепĕр хут вуласа тухма тытăнатăп, вара парти членне кĕрес ыйтăва лартатăп,—тет Красильников юлташ.

Парторганизаци секретарĕн отчетĕнче Осоавиахим организаци ĕçĕсем çинчен пуринчен те ытларах калана. Анчах та парторганизаци аппарат ĕçне лайăхлатассишĕн, ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн мĕнле кĕрешни çинчен, учреждени руководительне кадрсене суйласа илме мĕнле пулăшни çинчен кăшт кăна асăнса илчĕ.

— Партипе правительство решенийĕсем çинчен аппаратра ĕçлекенсене ăнлантарса памастпăр, профсоюз членĕсен пухăвĕсене ирттерми пултăмăр,— тет Павлов юлташ. Çакна пула аппаратра ĕçлекенсем ăмăртса ĕçлемеççĕ. Парторганизаци коммунистсен авангардлă рольне ӳстерес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлемен.

Радиокомитетра шанчăксăр çынсем те пулнă. Вĕсене ĕçре тытма май килмен, анчах парторганизаци аппарат ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме учреждени руководительне çийĕнчех пулăшман. Ĕç дисциплинине çирĕплетес пирки те çакнах каламалла. Парторганизаци СССР Верховный Совет Президиумĕ 1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнче каларнă Указ çинчен сӳтсе-явнипех лапланнă. Указа пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе куллен ĕçлемен, çакна пула халĕ те ĕç вăхăтĕнче картина ӳкерсе ларакансем пур. Çав вăхăтрах парторганизаци хăйне тивĕçлĕ мар ĕçсене тума хăтланни пулнă. Андреева юлташ ĕçрен тухма панă ыйтăва коммунистсен пухăвĕнче лартса сӳтсе-явнă.

Парторганизаци секретарĕ коммунистсен пухăвĕнче йышăннă решенисем мĕнле пурнăçланса пынипе пачах интересленмен. Çакна пула нумай решенисем пурнăçа кĕмен. Отчетра иртнĕ суйлавра коммунистсем мĕнле сĕнӳсем пани, вĕсене пурнăçа мĕнле кĕртни çинчен пĕр сăмах та пулмарĕ. Иртнĕ отчетпа суйлав пухăвĕнче коммунистсен ĕçри ответлăхне ӳстерес тĕлĕшпе конкретлă ĕçсем тума хушнă. Çак сĕнăве çулталăк хушшинче те пурнăçа кĕртмен. Коммунистсем мĕнле ĕçленипе парторганизаци интересленмен.

Отчетпа суйлав пухăвĕ парторганизаци секретарĕ отчета çителĕксĕр хатĕрленнине, партиллĕ-политикăллă ĕçе тата аппарат ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе куллен ĕçлемеллине кăтартса пачĕ.

Р. ШАШКОВ.

ВКП(б) Етĕрне райкомĕн пленумĕ

Апрелĕн 6-мĕшĕнче ВКП(б) Етĕрне райкомĕн пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум партипе правительство вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви тăвассине ӳстермелли мероприятисем çинчен йышăннă постановлението пурнăçа мĕнле кĕртсе пыни тата колхозниксене ĕçшĕн хусса тӳлесси çинчен йышăннă постановлението колхозсенче пурнăçа кĕртсе пырасси çинчен сӳтсе-явăрĕ.

Пĕрремĕш ыйтупа парти райкомĕн секретарĕ Акимов юлташ доклад туса пачĕ. Район куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли икĕ уйăхри плана 68 процента яхăн кăна тултарнă. Кирпĕч завочĕ хăйĕн планне çулран-çул тултараймасть. Кăçал та çавнашкалах, пĕрремĕш квартал планне тултараймарĕ.

Катка-пичкесем тата корзинкăсем тăвакан мастерской квартал планне 63 процент ытларах кăна тултарчĕ. Планпа пăхнă таварсене, сăмахран, корзинкăсене тата мучаларан тунă сумкăсене пачах кăларман.

Иртнĕ çулти пекех, кăçал та вырăнти промышленность лайăхрах ĕçлерĕ. Сталин ячĕпе тăракан артелĕн квартал хушшинче 137 пин тенкĕлĕх продукци кăлармалла пулнă пулсан, 230 пин тенкĕлĕх туса кăларнă. Кунта социализмлă ăмăрту тата стахановла движени анлăн сарăлса пырать.

«Ударник», «Красный яр» тата Чкалов ячĕпе тăракан артельсем хăйсен производствăллă планĕсене пĕрремĕш кварталта ытлашшипех тултарнă.

Стена хаçат редколлегийĕнче тăман заочник-селькорсен пĕлĕвне тĕрĕсленĕ чухне, вĕсем районри хаçат редакцийĕсене ярса тăнă сырусен содержанийĕ мĕнле лайăхланса пынине кăтартни кирлĕ. Çавăн пекех, брошюрăсем çинче сырнă канашсемпе рабселькорсем мĕнле усă курнине те тĕрĕслес пулать.

Стена хаçат редакторĕсен курсĕнче заочно вĕренекенсен пĕлӳне хаçат ĕçĕн практики çинчен кăларнă виçĕ брошюра тăрăх тĕрĕслемелле. «Организация работы стенной газеты»,—«Как править заметки» тата «Оформление стенной газеты» брошюрăсем заочниксен пĕлӳне тĕрĕслемелли тĕп брошюрăсем.

Шупашкар районĕнчи «Ленин çулĕпе» хаçат редакцийĕ заочниксен вĕренӳ çулне вĕçлемелли план тунă. Вĕсем çав плана пурнăçласа пыма тытăнчĕç. Заочно вĕренĕве хăçан тата мĕнле майпа вĕçлесси çинчен курсантсене пĕлтернĕ. Редакци сумĕнче заочниксен пĕлӳне тĕрĕслес тĕлĕшпе тăватă заняти ирттерме палăртнă. Вăл занятисенче райхаçат редакторĕ, ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующийĕпе тата ВЛКСМ райкомĕн председателĕпе пĕрле курсантсен пĕлӳне тĕрĕслеççĕ. Тĕрĕслӳ умĕн райони хаçат редакцийĕн работникĕсем выраçенче стена хаçачĕсен содержанийĕпе тата редколлегисен ĕçĕсемпе тĕплĕн паллашаççĕ. Редакцинче ирттерекен юлташла калаçусенче заочниксемпе пĕрле стена хаçат редколлегийĕсен членĕсем те пулаççĕ. Редколлеги членĕсем çав калаçусенче пулса, хăйсен стена хаçачĕн ĕçĕнчи çитменлĕхĕсемпе паллашма пултараççĕ. Çавăн пекех, стена хаçачĕн ĕçне урăхлатса çĕнетсе пыма вĕренеççĕ.

Курсантсемпе пĕрле заочниксен списокĕнче нулман, çав вăхăтрах хаçат дисциплини тăрăх литературăсем илсе вĕренме юлташсен пĕлӳне те тĕрĕслеççĕ. «Ленин çулĕпе» хаçат редакцийĕ тĕрĕслеве практикăллă ĕçсемпе сыхăнтарнă. Вĕсем калаçусенче курсантсем теори тĕлĕшĕнчен мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслеççĕ. Çакăн пек туни питĕ тĕрĕс пулать.

Шупашкар район хаçачĕн редакцийĕ хăйĕн планĕнче майăн 5-мĕшĕнче стена хаçат редакторĕсемпе редколлеги членĕсен районри канашлăвне ирттерме палăртнă. Канашлура вĕсем малта пыракан редколлегисен вĕренӳри опычĕсемпе паллашаççĕ. Редактор Семенов юлташ вырăнти пичет работникĕсен массăллă вĕренĕвĕн итогĕсем çинчен доклад туса парать. Районри канашлу умĕн заочниксем кăларакан стена хаçачĕсен выставкине организацилеме хатĕрленеççĕ.

Районри хаçат стена хаçачĕсене пулăшса пырать. «Ленин çулĕпе» хаçат редакцийĕ стена хаçачĕсене вăхăтра кăларса тăма пулăшас тĕлĕшпе макетсем сырăнса илнĕ. Стена хаçачĕ кăлармалли макетсене колхозсем культфонд енĕпе уйăрнă укçа шутĕнчен сырăнса илеççĕ.

ВКП(б) Шупашкар райкомĕ стена хаçат активĕн массăллă вĕренĕвне организацилес тĕлĕшпе аван ĕçленине палăртас пулать. Ку ыйтăва парти райкомĕн бюровĕнче темиçе хутчен те сӳтсе-явнă. ВКП(б) Центральный Комитечĕ стена хаçат редакторĕсемпе рабселькорсен массăллă вĕренĕвне организацилесси çинчен йышăннă постановление мĕнле пурнăçланнине парти райкомĕ май уйăхĕнче бюрора сӳтсе-явма пăхнă. Ку парти райкомĕн паха ĕçĕ пулса тăрать. ВКП(б) райкомĕсен пурин те партин Шупашкар райкомĕнчен пример илсе ĕçлемелле.

Хăшпĕр районсенче стена хаçат редакторĕсен заочно вĕренĕвĕ çителĕксĕр пырать. Канаш районĕнче заочниксем пĕр эрне каярах кăна вĕренме тытăннă. Çитменнине тата пĕр дисциплинăпа—вырăс чĕлхипе кăна вĕренме пуçланă. Заочниксем кирлĕ ыйтусене — стена хаçачĕ кăларасси çинчен вĕренмен пулин те, районри «Коммунизмăн» хаçат редакторĕ Антонов юлташ вĕренӳ ĕçĕсене вĕлеме, тĕрĕслӳ ирттерме хăтланать. Çакăн пек «итогсем» пачах усă памаççĕ, вĕсем никама та кирлĕ мар.

Канашри вагонсем юсакан заводри хаçат редакцийĕ те заочно вĕренес ĕçе кирлĕ пек хакламан. Унта заочниксем валли Мускавран ярса панă брошюрăсене редактор сĕтеллинче усранă. Вагонсем юсакан заводра та тĕрĕслӳ ирттерме май çук.

Колхозра кăлармалли стена хаçачĕн макетне районри хаçат редакцийĕ урлă çак адреспа çырăнса илме пулать: Москва, улица Люсиновская, дом № 30, Мосполиграф. Вĕсем 100 макет, краскăсем тата карандашсем ярса параççĕ. Хакĕ 35 тенкĕ тăрать.

Первомайски районри «Коммунар» хаçат редакцийĕн те тĕрĕслӳ ирттерме шухăшлама кирлех мар. Мĕншĕн тесен, унта стена хаçат редакторĕсен заочно вĕренĕвне организацилемен пулнă, брошюрăсене çулталăкĕпех салатман, редакцинче тытса усранă.

Заочно вĕренӳ ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем çалăраççĕ. Хăшпĕр районсенче брошюрăсене курсантсене салатса панă. Çав вăхăтрах пĕр консультаци ирттермен. Стена хаçачĕсен редакторĕсем хăйсем тĕллĕн заочно мĕнле вĕренсе пынине районри хаçат редакцисен тĕрĕслесе тăмалла пулнă. Кунсăр пуçне заочно вĕренсе пырса практикăллă ĕçр мĕнле улшăнусем тунине палăртмалла пулнă. Çак çитменлĕхсене вăхăтра пĕтермелле. Заочниксен пĕлĕвне тĕрĕслес ĕçе пысăк пахалăхпа ирттерес пулать.

Пичет кунне—майăн 5-мĕшне хатĕрленнĕ вăхăтра вырăнти пичет ĕçне сарлакан пăхса тухмалла. Стена хаçат редакторĕсемпе рабселькорсен районсенчи канашлăвĕсенче тата заочниксен пĕлĕвне тĕрĕслемелли юлташла калаçусенче стена хаçат ĕçне тĕрĕсленнин итогĕсем çинчен сӳтсе-явмалла.

Парти организацисемпе районри хаçат редакцийĕсем малта пыракан стена хаçачĕсен опытне анлăн сарса пымалла. Партри организацисем стена хаçатне ертсе пырас ĕçри çитменлĕхсене хăвăрт пĕтермелле. Стена хаçачĕсене парти организацисен çивĕч хĕçпăналĕ пулма пулăшмалла.

К. КУЗОВЛЕВ.

Стена хаçачĕсен ĕçне вăйлатса тата лайăхлатса пырар

Ĕççыннисене коммунистла воспитани парас ĕçре стена хаçачĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ, вĕсем ĕçсынни массăсене организацилекен хĕçпăнал пулса тăраççĕ. Пирĕн республикăра кăна стена хаçачĕсем виçĕ пине яхăн тухса тăраççĕ. Парторганизацисем лайăх ертсе пыракан, массăпа сыхăнса ĕçлекен хаçатсем хăйсен ĕçне чылай лайăхлатрĕç. Ку ĕçре вĕсене стена хаçачĕсен республикăри ăмăртăвĕ нумай пулăшрĕ.

Улатăр районĕнче малта пыракан «Путь Ильича» колхозри «Прожектор» ятлă стена хаçачĕ, республикăри ăмăртăва хутшăнса, хăйĕн ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе татăклă обязательство илнĕ пулнă. Çакăн хыççăн вăл редколлеги ĕçне актива йышлăн явăçтарса ĕçлеме тытăннă. «Прожектор» хаçата çыракансен йышĕ 152 çынна çитет. Ялхуçалăхĕнче малта пыракансем хаçат урлă хăйсен паха опычĕсем çинчен каласа параççĕ. Çуракине хатĕрленес ĕçре хаçат колхоза пысăк пулăшу парса тăрать.

Колхозри парторганизаци стена хаçатне лайăх пулăшса ертсе пырать, хаçат редколлегийĕнче ĕçлекенсен культурине тата политикăллă пĕлĕвне ӳстерессишĕн куллен тăрăшать. Çакăсем стена хаçачĕн пахалăхне ӳстерме май парараççĕ. Кун пек паха примерсене татах та илсе кăтартма пулать.

ЦК ВКП(б) хушнă тăрăх, стена хаçат редакторĕсемпе рабселькорсене заочнăй йĕркене массăллăн вĕрентессине организацилени вырăнти пичет валли кадрсем вĕрентсе хатĕрлес çĕрте çавăтери пысăк вырăн йышăнчĕ. Вăл районри хаçатсен авторĕсен кадрне вĕрентсе пымалли чи лайăх форма пулса тăчĕ.

Заочнăй курссене ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен ертсе пымалла. Ку çулĕ вĕçленнĕ вăхăтра пулса иртеççĕ. Районри хаçат редакцийĕсем курсантсен пĕлĕвне тĕрĕслеме—республикăра вырăнти хаçатсем мĕнле тухса тăнине тĕрĕслеме тытăнчĕç. Çавăнпа та, отчетпа суйлав пухăвĕсенче коммунистсен, парторганизаци ĕçне тишкĕрсе тухнипе пĕрлех, стена хаçачĕн ĕçне те тĕплĕн пăхса тухмалла. Çакăн пек туни—вăл стена хаçатне парторганизацин боевой оргăнĕ туса хума пулăшĕ. Парторганизаци кашниех, унăн стена хаçачĕ лайăх ĕçлетĕр тесен, стена хаçат редколлегин составне хутла, политикăна лайăх пĕлекен тата хаçат ĕçне хăнăхнă сынсене уйăрса парса çирĕплетмелле. Заочнăй курсран вĕрентсе тухнă сынсене стена хаçатне кăларас ĕçе явăçтарасси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Мĕншĕн тесен, вĕсем çулталăк хушшинче теори тĕлĕшпе те, практика енчен те хаçат ĕçне чылаях хăнăхса çитнĕ çынсем.

ВКП(б) Обкомĕ тата «Большевистская печать» журнал кăтартса панă тăрăх, районри хаçат редакцийĕсен апрелĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа майăн 5-мĕшĕн курсантсен пĕлĕвне тĕрĕслемелле. Курсантсен пĕлӳлĕхне тĕрĕслесси районри хаçат редакцийĕсем умĕнче тăракан пысăк тата ответлă ĕç пулса тăрать. Тĕрĕслеве çиелтен тата ячĕшĕн çеç ирттермелле мар. Çавăн пекех, тĕрĕслеве экзамен евĕрлĕ ирттерме шухăшлани те тĕрĕс пулмасть. Районри хаçат редакторĕсен тата консультантсен заочниксемпе юлташла калаçусем туса ирттермелле. Çав калаçусем урлă курсантсен пĕлӳне палăртас пулать.

Курсантсен пĕлӳне тĕрĕсленĕ чухне, чи малтан стена хаçачĕсен ĕçне лайăхлатма пулăшас тĕлĕшпе ятарласа кăларнă брошюрăсенче кăтартнă канашсемпе мĕнле усă курнине палăртмалла. Стена хаçачĕн содержанийĕ, литературăпа художество енĕпе мĕнле çĕнелесе тата лайăхланса пынине тĕпчесе пĕлес пулать. Стена хаçачĕ кăларасси лайăхланса пынине, унта çырнисене мĕнле пурнăçа кĕртнине т. ыт. палăртмалла.

ÇУРАКИ УМЁН

Çуракине тивĕçлипе хатĕрленмелле

Район центрĕнче, Калининора, вăхăтран вăхăта ханашлусемпе слетсем туса ирттерекçĕ. Вăл канашлусемпе слетсем тĕрлĕрен ыйтусемпе пулаççĕ, вĕсенчен пĕрине ялхуçалăх ыйтăвĕсемпе пухаççĕ пулсан, унта колхоз председателĕсемпе бригадирсем тата ялхуçалăхĕнче малта пыракан ытти çынсем тĕ йышлăн пуханаççĕ. Ун пек чухне пĕртĕр доклад хыççăн тухса калаçакансем те самай пулаççĕ, тата вĕсем хăйсем сине, трибуна сине хăпарнă май, «татăклă обязательствăсем» илеççĕ. Çавăн пек çынсен шутне Карачурари «Путь Ленина» колхоз председателĕ Аврам Титов та кĕрет. Вăл социализмлă ăмăрту çинчен нумай калаçма юратать:

— Ăмăрту вăл пĕтĕм ăнăçлăха татса парать, çитĕнӳсем тума пулăшать, кая юлса пыракансене малта пыракансемпе танлаштма хавхалантарать... Социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пымалла. Ăмăрту...

Вăл хăй мĕн çинчен каланине хыççăнах манать, урăх ун патне часах çавăрăнса пымасть.

Аврам Титов юлташ ертсе пыракан колхозра хăшпĕр вăрлăхсем кондицине лармаççĕ. Удобрениссене çителĕксĕр хатĕрленĕ. Колхоз правленинче ĕçлекенсем:—эпир Тури Кăканарти «Правда» колхозпа ăмăртатпăр, теççĕ. Хăйсен ăмăрту договорĕ çук. Кăçал колхоз гектартан мĕн чухлĕ тĕштырă туса илме пулни çинчен колхозниксем пĕлмеççĕ.

Ку факт Калинински районра пĕртенпĕр факт мар. Районра çакнашкал йăла пур: социализмлă ăмăрту çинчен çулталăкра пĕрикĕ хут асăнаççĕ. Малтанах вăл сăмаха пĕр-пĕр районпа ăмăртăва тухас умĕн тапратаççĕ, унтан... Урăх ун çинчен никам та аса илмест, манăça тухать.

Кăçал та, иртнĕ çулти пекех, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен слетĕнче район Элĕк районĕпе социализмлă ăмăртăва тухма йышăнса хăварчĕ, татăклă обязательствăсем илчĕ. Тыркул тухăçлăхне хăпартас, выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерес ыйтусем тăрах пысăк цифрăсем кăтартрĕç.

Обязательствăсем пысăк. Вăл обязательствăсене пурнăçа кĕртес тесен чăнчăн большевикла кĕрешӳ кирлĕ. Ку кĕрешӳ тивĕçлипе сарăлса пырать-и?

Ĕççынни депутачĕсен районри Советĕн исполкомĕнче те, ВКП(б) райкомĕнче те, районри çĕрĕç пайĕнче те вăл кĕрешӳ çинчен çакăн пек каласшине илтме пулать: «Колхозсем ăмăртса ĕçлеççĕ. Апла пулсан çуракине ăнăçлăн хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илетпĕр. Ăмăртура кая юлмастпăр».

Чăнахах çапла-и вăл?

Ермошкăри Калинин ячĕпе тăракан колхоз район центрĕнчен ытла аякра мар. Районри хăшпĕр сведенисем тăрăх, ку колхоз «юнашар тахăш колхозпа» ăмăртать. Тĕрĕссипе, колхоз правленинче ĕçлекенсенчен пĕри те хăш колхозпа ăмăртăва тухни çинчен сĕтел сунтăхĕнчи хутсене пĕтĕмпех пăлтатса пĕтермесĕр каласа параймаççĕ. Колхозра ăмăрту договорĕ çук. Кăçалхи производство планĕ хатĕр мар. Вăрлăхсем пĕри те кондицине лармаççĕ. Хĕллехи вăхăтра 2000 тонна торф кăларас вырăнне 900 тонна кăна кăларнă.

Районра çуракине хатĕрленесси çителĕксĕр пырать. Çураки сывхарса килет. Чылай колхозсенче вăрлăхсем пачах кондицине лармаççĕ, клевер вăрлăхĕ çителĕксĕр.

Юлашки вăхăтра колхозниксен ĕçлес хастарлăхĕ куллен хăпарса пырать. «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕмĕн Чăваш АСС Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановленине районри чылай колхозсенче сӳтсе-явнă хыççăн колхозниксем ĕç тухăçлăхне хăпартса пырассишĕн кĕрешме тытăнчĕç.

Ив. МОСЕЕВ.

Калинино.

Производствăллă плана хакламаççĕ

ХĔРЛЕ ЧУТАЙ. Мунчкассинчи «ВКП(б)» колхозра производствăллă плана çулсеренех тăваççĕ. Анчах çав плана пурнăçа кĕртессишĕн тивĕçлипе кĕрешни çук. Кунта производствăллă плана хисеплемеппи уйрăмăнах палăрать вара. Плана çул пуçламĕшĕнчех тăваççĕ. Ана пухура çирĕплетеççĕ. Çакăн хыççăн вара ăна ĕç хучĕсемпе пĕрле çĕлесе ткапа хурассĕ те, ун çинчен пĕрре те аса илмеççĕ. Вăл колхоз руководителĕсем хăш кунта мĕн тума аса илеççĕ, çавна тăваççĕ. План тăрăх мар, кам мĕнле пĕлнĕ, çавăн пек ĕçлеççĕ. Паллах ĕнтĕ, çавăн пек ĕçлеççĕ. Паллах ĕнтĕ, çавăн пек ĕçлеççĕ производствăллă план пурнăçа кĕрессине кĕтме çук.

Ку колхоз иртнĕ çулта хăйĕн производствăллă планне пурнăçа кĕртеймерĕ. Тырпул тухăçĕ, выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхĕ енĕпе тата тĕрлĕ строительство ĕçĕсем тăрăх плана тултараймарĕ. Тырпул тухăçне планпа палăртни чухлĕ илейменни — вăл агротехникăллă мероприятисен планне пурнăçламан пирки пулнă. Тĕштырă акмалли çĕр çине тислĕк 4.600 лав кырăнне 2.133 лав çеç тăкнă пулнă. Минерал çăнăхне те кирлĕ чухлĕ кӳрсе килмен.

Колхозăн иртнĕ çулта 0,25 гектар çинче вишни йывăççисем лартса хăварманнине çаплах.

1941 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне сурăхсем 45 пуç вырăнне 39 пуç кăна пулнă. Çавăн пекех лашасем тата ĕнесем ĕрчетес енĕпе те плана тултарман.

Колхозăн производствăллă планĕ тăрăх иртнĕ çулта чылай çуртйĕрсем тумалла пулнă. Палăртнă стройкăсеннчен иккĕшне кăна туса çитернĕ (çĕрулми хывмалли вырăн тата конюхсене пурăнмалли çурт). Хăшпĕр стройкăсене тытăнман та.

Пĕр сăмахпа каласан, колхоз иртнĕ çулти производствăллă планă чылай ĕçсем тăрăх пурнăçа кĕртеймерĕ. Колхоз руководителĕсем производствăллă плана 1941 çулшăн ку таринчен те туман.

П. ТИХОНОВ.

Оборудованисемпе туллин усă курас пулать

ÇЕМĔРЛЕ. (**Хамăр корр.**). Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕнче Маленков юлташ хăшпĕр предприятисенче оборудованисемпе, инструментсемпе туллин усă курманни çинчен лайăх каласа панă. «Нумай предприятисенче инструмент хуçалăхне япăхтарса янă, материалсемпе, чĕртаварпа, топливăпа начар тата перекетĕр усă курассĕ. Предприятисенче сахал мар станоксемпе ытти оборудовани ĕçсĕр тăрса ирттереççĕ, хăш чухне просто çав предприятисен склачĕсенче выртаççĕ, çав вăхăтрах ытти предприятисенче вăл оборудовани çуккипе питех те аптăрассĕ», тенĕ конференцинче Маленков юлташ.

Анчах Çĕмĕрлери «Труженик» завод руководителĕсем партин XVIII конференцийĕ йышăннă решенисене пурнăçлас тĕлĕппе конкретлă ĕçсем туни курăнмасть-ха.

Завод коллективĕ январьпе февральти плана тултарайман. «Пирĕн материалсем пулман» терĕç унчухне завод руководителĕсем. Вĕсем каланă тăрăх, завод март уйăхĕнче хăйĕн ĕçне лайăхлатмаллаччĕ. Март уйăхĕнче те плана 91,3 процент кăна тултарнă.

Ку мĕнрен килнĕ-ха? Çак ыйту çине хăшĕсем ĕç вăйĕ çителĕксĕрри çине, теприсем материалсем çителĕклĕ пулманни çине йăвантарма пăхаççĕ. Анчах оборудованисемпе туллин усă курманни çинчен никам та нимĕн те шарламасть.

Фанера цехĕнче икĕ пресс ĕçлемелле. План тăрăх çак цехăн сменăра 1.100 лист фанера туса кăлармалла. Чылай вăхăт хушши ĕнтĕ кунта пĕр пресс кăна ĕçлет, теприн ремонтра лараять. Çавна пула цех куллен 625—725 лист çеç фанера кăларать. Тепĕр чухне ку пресс та простой тăвать.

Сăлтав — пăс паманнинче. Пăспа вăй паракан станци япăх ĕçлет. Мартăн 31-мĕшĕнче пресс 2 сехет ытла, апрелĕн пĕрремĕшĕнче — 40 минута, халĕ те кашни кунах 30—80-шар минута ĕçлемесĕр тăрать.

Çак цехрах пĕр лущильнăй тата тепĕр клеильнăй станоксем ĕçлемесĕр лараççĕ. Цех начальникĕ Герасимов юлташ калать тăрăх, ку станоксем ĕç вăйĕ çитмен пирки кăна ахаль лараççĕ.

Çапла вара фанера тăвакан цехра пĕр пресс тата лущильнăйпа клеильнăй станоксем ĕçлемесĕр тăраççĕ. Ку вăл цехри оборудованисенчен 50 процентне яхăн йышăнать. Çавăнпа ĕнтĕ цех яланах хăйĕн программине 30—40 процент çеç тултарса пырать, мартри плана вăл пĕтĕмпе те 33,5 процент кăна тултарнă.

Стружка цехĕ хаклă йышши станоксемпе пуянланнă. Кунта пĕтĕмпе 7 станок. Кашниех вĕсем сменăра 700—800 килограмм стружка туса кăларма пултараççĕ. Малта пыракан стахановецсем питех те паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Агриппина Волкова юлташ, икĕ станокпа ĕçлесе, кашни сменăра 1400—1500 килограмм стружка туса кăларса, нормăна икшер хут ирттерсе тултарать. Киселева, Подклетнова, Смирнова юлташсем те хăйсен нормисене 150—200 процент тултараççĕ. Анчах хăшпĕр станоксем кирлĕ пек ĕçлемеççĕ. Мĕншĕн тесен, пĕрисен хăшпĕр пайĕсем çук, теприсем — пачах ĕçлеме юрăхсăр. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш номерлĕ станоксем шестернисем çук пирки час-часах простой тăваççĕ.

Иртнĕ çулти август уйăхĕнче 1-мĕш номерлĕ станок çĕмĕрлесе кайнă пулнă. Тĕрĕссипе калаçан, ăна юсама пысăк вăй кирлĕ пулман. Анчах ответлăха туйман руководительсем станока ĕçе ярас вырăнне ăна пачах япăхтарса янă: хăшпĕр пайĕсене кăларса илнĕ, пăсма пуçланă. Каярахпа ăна юсама шутланă, фундамент хунă. Çук, май килмен: «ăçтан ăна ĕçе яратăн, пăхăр, пайĕсем çук», тенĕ механик.

Унтанпа 7 уйăх иртрĕ. Çак станок çинчен завод руководителĕсем кăна мар, цех начальникĕпе Герасимов юлташ та пачах манса кайнă. Халĕ ĕнтĕ ун çине пăхсан, ăна станок теме çук, вăл пайăн-пайăн сапаланса кайнă, пысăкрах пайĕсем пĕр кĕтесре выртаççĕ.

Çак станок ĕçлеменни пысăк сиен тăвать. Вăл станок талăкне сахалтан та 3 пин тенкĕлĕх продукци пама пултарать.

«Труженик» заводра оборудованисемпе туллин усă курманни чăн малтанах завод руководителĕсенчен килет. Вĕсем станоксемпе агрегатсем ахаль тăнине куратăркачах нимĕнле мера йышăнмасăр лараççĕ.

Хар. ЛИСИН.

Складсемпе нӳхрепсем

— Складсем тĕлĕппе пирĕн ĕçсем начар тăмаççĕ-ха. Райпотребсоюзăх вара... Вĕсем склад çитменнине пула нумай таварсене килкартинче, ирĕкре сыхласа усраççĕ,—тет Çĕрпӳ горпо правленийĕн председателĕ Карсаков юлташ.

Пăхса çӳретĕн те, складсем тĕлĕппе горнора та, райпотребсоюзри пекех, ĕç начар тăнине куратăн. Малтан складсем пирки мар, нӳхрепсем пирки. Çĕрулми тата пахча-çимĕç хывса усрама виçĕ нӳхреп пур. Пĕр нӳхреп патне пыратăн. Кăркунне ун тавра тăпра тултарса тата канав чавса тухман. Халĕ нӳхрепе шыв кĕрсех тăрать, чарса та ĕлкĕреймеççĕ. Сакна пула, унта юлнă 20 тонна ытла çĕрулмине ăçта та пулин сутса яма тăрăшаççĕ. Тепĕр нӳхрепре 35 катка тăварланă хăяр пулнă. 10 каткине пушатнă, анчах та вĕсене хăвăртрах кăларса тасатса хума васкамаççĕ, çĕртсе лартаççĕ. Кунта та шыв анать. Çапла вара ахалех нӳрĕ тăракан нӳхрепсем çурхи шывпа йĕпенсе пăсăлса пĕтме пултараççĕ.

Виçĕ склада тĕрлĕ таварсем тултарнă. Малтанах пĕр складне тăвар хывнă пулнă. Урайсем йĕпенсе тараççĕ, апла пулин те кунта промысла таварĕсем хывса тултарнă. Унпа юнашарах хăма çапса тунă склад пур. Кунта сĕтел пукан, ватка, кĕленче таппа ытти таварсем тăраççĕ. Хĕл вăхăтĕнче юр кĕрсе тулнă, халĕ çурт тăрринчен шыв анать. Складсене йĕркелĕ тытманнине пула паха таварсене пăсма пултараççĕ.

Райпотребсоюзăн складне илсе пăхар. Малтанхи вăхăтра тимĕр-тăмăр, çимĕç тата промысла таварĕсен склачĕсем уйрăм вырăнсенче пулнă. Халĕ пур тĕрлĕ таварсене те пĕр склада тултарса лартнă. Склад пĕчĕккĕ мар. Таварсене уйрăм çулĕксем çине йĕркелесе хурса тухма пулать. Анчах та çавна тумаççĕ. Складра нимĕн йĕрки те çук.

Кунта нумай тĕрлĕ таварсене нрĕкрех усраççĕ. Сăмахран, акă, пукан, спичка, канфет тата ытти чылай таварсене лупас айĕнче усраççĕ.

Промышленность предприятийĕсенче кăларакан тĕрлĕ таварсем лавкасемпе магазинсем урлă тавар илекенсем патне çитиччен складсенче сыхланса тăраççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ суту-илӳ организацийĕсен таварсене пăсăлма памалла мар. Потребитель лайăх пахалăхлă товар ыйтнине нихăçан та манма юрамасть.

Çĕрпӳ. (**Хамăр корр.**).

Протравить тумалли хатĕрсем складсенчех выртаççĕ

Вăрлăхсене протравить тăвасси — тырпул тухăçне ӳстермелли палла ĕçсенчен пĕри пулса тăрать. Çак ĕçе ăнăçлăн туса ирттересси препаратсем («АБ» препарат, Давыдов препаравčĕ тата формалин) вăхăтра хатĕрлесе çитернинчен килет).

Çак препаратсене ялхуçалăх снабжени склачĕсенчен колхозсене питех те çителĕксĕр кӳрсе каяççĕ. Протравить тумалли хатĕрсене апрелĕн 1-мĕш тĕлне пурĕ 23.234 килограмм илсе каймалла, халлĕхе мĕнпурĕ те 5.580 килограмм çеç кӳрсе кайнă. Елчĕк, Чкаловски, Комсомольски, Сĕнтĕр, Первомайски тата Канаш районĕсенчи колхозсем пĕр килограмм та кӳрсе кайман.

Протравить тумалли хатĕрсене çуна çулĕ пур чухне кӳрсе кайма тăрăшас пулать. Çак ĕçе васкатас тĕлĕппе райсĕвĕç пайĕсен çине тăрса ĕçлени кирлĕ. Вĕсен ку тĕлĕппе Етĕрне районĕнчен пример илмелле. Ку районри колхозсем протравить тумалли препаратсене кирлĕ таранах хатĕрлесе çитереççĕ ĕнтĕ.

Агроном **Т. НИКИТИН.**

Техникăллă культурăсем акассине чакараççĕ

КАЛИНИНО. Анатри Кăканарти «Ударник» колхоз производствăллă план туса хатĕрленĕ. Ку производствăллă план тăрăх акă мĕн курăнать: иртнĕ çулта колхоз 4 гектар кантăр акнă, ăна кăçал 3 гектар кăна акма пăхнă. Çавнашкалах пĕлтĕр икĕ гектар ясмăк акнă, кăçал 1 гектар, пăри 4 гектар вырăнне 2 гектар кăна акма пăхнă.

— Мĕншĕн çак культурăсене акассине чакарса пыратăр? — тесе ыйтсан: —пирĕн кунта кантăр аксан та пулмасть, тесе ответлеççĕ.

Партипе правительство техникăллă культурăсене (кантăр т. ыт. те) акмалли çĕр лаптăкăсене анлăлатса пыма кирлине кăтартса параççĕ, Анатри Кăканарсем ăна чакарса пыраççĕ.

«Ударник» колхозăн 26 гектар клевер акмалла. Вăрлăх унăн çуррине акмаллăх та çук. Пăрачкавран 2 центнер клевер вăрри илсе килмелле, халĕ ăна кӳрсе килме кайман. Кĕçех клевер акас вăхăт çитет, ун çинчен шухăшламаççĕ-ха.

Вокзалта тасалăх пулмалла

Шупашкарти чугунçул станцинче нумаях пулмасть çĕнĕ вокзал ĕçе кĕчĕ. Вокзал çурчĕ чугунçул станцине илемлетсе ларать. Çурчĕ пысăк, ăна тултан та, шал енчен те лайăх илемлетнĕ. Вокзалта пассажирсене кĕтмелли зал, ачаллă хĕрарăмсем валли пӳлĕм, буфет тата хаçат-журналсем сутмалли киоск пур. Пĕр сăмахпа каласан, вокзалта кирлисем пурте çителĕклĕ. Çавăнпа ĕççыннисем çĕнĕ вокзал уçăлнине пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç.

Вокзал хăйĕн пысăккăшĕпе тата унти оборудовани енĕпе паллăрах хуласенчи вокзалсенчен пачах юлмасть. Апла пулин те кунта культурлăхпа тасалăх йĕркисене чăннипех пурнăçласа пыма тытăнман-ха. Вокзалта таса мар ăпаласене пăрахмалли урнăсем çук. Пассажирсем хут татăкăсене урайне пăрахаççĕ. Пассажирсенчен те хăшпĕрисем культурлăха хисеплеменни курăнать. Вокзалта чĕлĕм тутăма юраманни çинчен асăрхаттаракан пĕлтерӳсене курнă çĕртенех, çав йĕркене пăхăнмаççĕ.

Буфет та пассажирсене кĕтсе илме çителĕксĕр хатĕрленнĕ. Сулахай енчи буфетра апат-çимĕçсене ларса çиме пукансем çитмеççĕ. Сĕтел çинчен апат çинĕ хыççăн юлнă çимĕçсене, савăт-сапасене вăхăтра пуçтармаççĕ. Таса мар савăт-сапасем сутма хатĕрленĕ çимĕçсемпе пĕр сĕтел çинчех лараççĕ. Буфетра урайне йĕркелĕ шăлса тăмаççĕ.

Союзпечать конторин хăйĕн вокзалти киоскĕн ĕçĕсене тĕрĕслесе тăмасть. Хаçат-журналсем, кĕнекесем усрамалли шкаф тусанланса кайнă. Киоскра ĕçлекен Саменков кивĕ хаçатсемпе хут татăкĕсене урайне е шкаф хыçне пăрахать. Киоск вырнаçнă çĕрте таса мар. Вокзалтан çынсем саланса пĕтичченех Саменков киоска хупса каять. Çав вăхăтрах çĕнĕ хаçатсене сутса та пĕтереймест.

Шупашкар хула Совечĕ йышăннă постановленипе тăрăх, чугунçул станцине çӳремелли çула апрелĕн 5-мĕшĕнче тасатмалла пулнă. Кунсăр пуçне çулăн икĕ енĕпе шыв юхса кайма канавсем чавма палăртнă. Çулийĕр ĕçĕсен конторин (начальникĕ Аверьянов юлташ) хăйне тума хушнă ĕçе вăхăтра пурнăçлама тăрăшмасть.

Чугунçул станцине çӳремелли çула вăхăтра тасатмасан, çурхи шыв вăхăтĕнче унта автомашинăсемпе çӳреме пулмасть. Юртан тасатнă çĕрте çул пăсăлма та пуçланă.

Складсемпе нӳхрепсем

— Складсем тĕлĕппе пирĕн ĕçсем начар тăмаççĕ-ха. Райпотребсоюзăх вара... Вĕсем склад çитменнине пула нумай таварсене килкартинче, ирĕкре сыхласа усраççĕ,—тет Çĕрпӳ горпо правленийĕн председателĕ Карсаков юлташ.

Пăхса çӳретĕн те, складсем тĕлĕппе горнора та, райпотребсоюзри пекех, ĕç начар тăнине куратăн. Малтан складсем пирки мар, нӳхрепсем пирки. Çĕрулми тата пахча-çимĕç хывса усрама виçĕ нӳхреп пур. Пĕр нӳхреп патне пыратăн. Кăркунне ун тавра тăпра тултарса тата канав чавса тухман. Халĕ нӳхрепе шыв кĕрсех тăрать, чарса та ĕлкĕреймеççĕ. Сакна пула, унта юлнă 20 тонна ытла çĕрулмине ăçта та пулин сутса яма тăрăшаççĕ. Тепĕр нӳхрепре 35 катка тăварланă хăяр пулнă. 10 каткине пушатнă, анчах та вĕсене хăвăртрах кăларса тасатса хума васкамаççĕ, çĕртсе лартаççĕ. Кунта та шыв анать. Çапла вара ахалех нӳрĕ тăракан нӳхрепсем çурхи шывпа йĕпенсе пăсăлса пĕтме пултараççĕ.

Виçĕ склада тĕрлĕ таварсем тултарнă. Малтанах пĕр складне тăвар хывнă пулнă. Урайсем йĕпенсе тараççĕ, апла пулин те кунта промысла таварĕсем хывса тултарнă. Унпа юнашарах хăма çапса тунă склад пур. Кунта сĕтел пукан, ватка, кĕленче таппа ытти таварсем тăраççĕ. Хĕл вăхăтĕнче юр кĕрсе тулнă, халĕ çурт тăрринчен шыв анать. Складсене йĕркелĕ тытманнине пула паха таварсене пăсма пултараççĕ.

Райпотребсоюзăн складне илсе пăхар. Малтанхи вăхăтра тимĕр-тăмăр, çимĕç тата промысла таварĕсен склачĕсем уйрăм вырăнсенче пулнă. Халĕ пур тĕрлĕ таварсене те пĕр склада тултарса лартнă. Склад пĕчĕккĕ мар. Таварсене уйрăм çулĕксем çине йĕркелесе хурса тухма пулать. Анчах та çавна тумаççĕ. Складра нимĕн йĕрки те çук.

Кунта нумай тĕрлĕ таварсене нрĕкрех усраççĕ. Сăмахран, акă, пукан, спичка, канфет тата ытти чылай таварсене лупас айĕнче усраççĕ.

Промышленность предприятийĕсенче кăларакан тĕрлĕ таварсем лавкасемпе магазинсем урлă тавар илекенсем патне çитиччен складсенче сыхланса тăраççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ суту-илӳ организацийĕсен таварсене пăсăлма памалла мар. Потребитель лайăх пахалăхлă товар ыйтнине нихăçан та манма юрамасть.

Çĕрпӳ. (**Хамăр корр.**).

Кĕперсене сыхлаççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Район территорине Çавал, Шетмĕ шывĕсем çинче пурĕ 9 кĕпер шутланать. Çак кĕперсем пурте çурхи шыв юхтарса каяс хăрушлăх умĕнче тăраççĕ. Çурхи шывсем тулнипе кĕрешекен районри тройка кĕперсене çурхи шыв юхтарса каяспа сыхлама 8 бригада организациленĕ, унта 94 çын шутланать. Ку бригадăсене 5 фонарь, 25 пагор, 10 вĕрен тата 5 цинковăй канат хатĕрлесе панă.

Çавал шывĕ, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, кăçал вăйлăн тулса пырать. Çавăнпа та Красноармейское—Çĕрпӳ тракчĕ çинче Çавал урлă хывнă кĕпере сыхлассине уйрăмăнах вăйлатнă. Унта 40 кубла метр запас йывăç хатĕрленĕ, кĕпер айĕнчи тата айккинчи сăртсене шыв çурасран улăм сарса, ун çине чулсемпе витсе тухнă. Ледорезсене пурне те юсанă. Кĕпер çинчи будкăна телефон кĕртнĕ. Кĕпере çĕрĕн-кунĕн пĕр татăлмасăр сыхлаççĕ.

Çул çинче шыв çĕмĕркен вырăнсенче 12 километр тăршшĕ канав чавса тухнă, çавăн пекех çул урлă каçакан трубасене те юртан тасатнă. **П. М-в.**

Таджик халăхĕн искусстви

Наципе искусствăн Мускаври пĕрремĕш декадине ирттернĕренпе нумаях та пулмасть 5 çул тултарчĕ. Украинăри искусствăсен мастерĕсен выступленийĕ СССР столицинче — Мускавра—Совет Союзĕнчи халăхсен искусствине çулсеренех кăтартас ĕçе пуçласа ячĕ. Наципе искусствăн декадисем мухтавлă традици пулса тăчĕç, вĕсем театр, музыка тата изобразительнăй искусство тăвăлăн ӳссе ҫеҫекленнине, Совет власĕ туса хунăранпа çĕршывра музыкантсен, юрăçсен, ташăссен, драма артисчĕсен, художниксен мĕнле чаплă кадрĕсем ӳссе çитĕннине кăтартса парассĕ.

Юлашки пилĕк çул хушшинче столицăри общественность Украина, Казахстан, Грузи, Узбекистан, Азербайджан, Киргизи, Армени, Белорусси, Бурят-Монголи искусствипе çывăх паллаштрĕ. Халĕ ĕнтĕ Мускавра Таджик искусствин декадине ирттереççĕ. Çакă та, халиччен пулса иртнĕ декадăсем пекех, совет искусствин пурнăçĕнчи пысăк события, ленинла-сталинла наци политикин çĕнĕ çĕнтерĕвĕл демонстрацийĕ пулса тăрать.

Таджик халăх культурин историйĕ—нумай ĕмĕрсене тăсăлса выртакан пысăк истори. Халăх халлапçисем, юрăçăсем, музыкантсем, художниксем çĕршер çулсем хушши чаплă юрăсемпе легендăсем хунă, музыкăллă мелодиссем кĕвĕленĕ. Бухара эмирĕпе вырăс империализмĕн пусмăрĕ наци искусствине аталанса ӳсме чăмартаярса тăнă. Халăх хăй курма пултарнă зрелищĕсене питех те юратса пăхнă. Халлапçăсем, агробатсем, жонглерсем, борецсем, вĕрен тăрăх утакансем хăйсен ăсталăхне кишлаксемпе базарсенче кăтартса çӳренĕ. Хĕвелтухăçĕнчи чаплă поэтсем — Фирдоуси, Саади, Фызули, Навои çырнă произведенисене юрăçсем халăх хушшине сарнă.

Октябрьти социализмлă вăсăлă революци таджик халăхне, хамăрăн тăван çĕршыври мĕнпур халăхсем пекех, хăйĕн культурине — формипе наципе, содержанийĕпе социализмлă культурăна, хăйĕн профессиллĕ искусствине аталантарса çитĕнтерме май пачĕ. Емĕрсем тăршшĕнче кĕвĕленнĕ тата ăруран ăрăва куçса пынă музыка мелодийĕсемпе халăх кĕввисем çĕнĕ юрăсем тата музыкăллă пирвайхи пысăк произведенисем çырмалли никĕс пулса тăнă. Талантлă самрăксем пултарулăх кружокĕсенче хавхаланса ĕçлеме пуçланă, каярахпа вĕсенчен таджиксен профессиллĕ театрĕсем çуралса тухнă. Халиччен тулашри пĕтĕм тĕнчерен параннджа хупăрласа тăнă таджичка-хĕрарăм та искусство ĕçне явăçнă.

«Таджикистанри работниксем! Хăвăрăн çĕршывăн культурине хăпартса пырăр, унăн хуçалăхне вăйлатса пырăр, хулари тата ялти тружениксене пулăшăр, хăвăр тавра тăван çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсене пĕтĕçтерсе пырăр тата эсир хăвăрăн мăнасласусен чи лайăх потомокĕсем, ирĕклĕх ялавне хăвăрăн алăра çирĕп тытса тăракан çынсем пулса тăнине пĕтĕм Хĕвелтухăçне кăтартса парăр», — тесе çырнă 1925 çулта Сталин юлташ Таджикистанри работниксене чĕнсе каланинче. Халăхсен аслă çулпуçĕн чĕнĕвĕ Таджик ССР хуçалăхĕпе культурине вăйлатса чечеклентерессишĕн пыракан кĕрешӳ ялавĕ пулса тăнă. Ленин — Сталин партийĕн ялавĕ çайĕнче, аслă вырăс халăхĕ пулăшнипе, Таджикистанри мĕнпур ĕççыннисем хăйсен çĕршывне коммунизм строительствин анлă çулĕ çине илсе тухрĕç.

Совет власĕ туса хунăранпа иртнĕ çулсем хушшинче Таджик ССР вăрăм çула утса тухрĕ, вăл ӳссе чечеклечĕ тата çирĕпленчĕ, хăйĕн çĕнĕ содержанине тивĕçлĕ формăсем тупрĕ. Хальхи вăхăтра республикăра республика театрĕсем 4, облаççи театрĕсем 5 театр, районсенче колхоз театрĕсем 12 театр, Таджикĕн государство филармонийĕ пур. Театрсем Таджикистанăн пысăк центрĕсенче — Сталинабадпа Ленинабадра кăна мар ĕçлеççĕ. «Тĕнче тӳпи» çинче — Хорогра та — темиçе çул хушши ĕнтĕ драма театрĕ ăнăçлăн ĕçлет.

Таджик искусствин декадине хатĕрленес тĕлĕппе туса ирттернĕ ĕç — республикăри творчествăллă вăйсен смотрĕ пулнă. Таджикистанри искусство работникĕсем Мускавра хăйсен ĕçĕн чи лайăх образецĕсене, музыка, хореографи, драма искусствипе изобразительнăй искусство ĕçĕнчи пысăкрах çитĕнӳсене кăтартса парас кăмăлпа хавхаланса çĕкленнĕ.

Декада программинче Государствăн Таджикистанри операпа балет театрĕн спектаклĕсем тĕп вырăн йышăнса тăраççĕ. Таджиксен пĕрремĕш опери — «Восе восстанийĕ» (либреттине çамрăк поэтсем Турсун-Задэ тата Дехоти çырнă, музыкине — Таджик ССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Баласанян). Çак опера темине халăхăн анлă сăрлăх поэминчен — иртнĕ ĕмĕрти 80-мĕш çулсенче дехкансем Бухара эмирне хирĕç пуçланă восстание ертсе пынă легендăрлă герой Восе çинчен çынă поэмăран илнĕ. Баласанянпа Бобокалановăн «Тимĕрçĕ Кова» опери те интереслă. Унăн либреттине Фирдоусин «Шах-Нама» ятлă чаплă поэмин сюжечĕ тăрăх Лахути çырнă. Çак опера таджик халăхĕн сĕм авалхи пурнăçĕнчи событисене кăтартса чĕртсе тăратать, ремесленниксемпе дехкансен, шах пусмăрне хирĕç пуçланă восстанийĕ çинчен каласа парать.

Декадăн виççĕмĕш спектаклĕ — музыкăллă представлени «Пола» («Тюльпан») паянхи кун çинчен калать. Колхозри çурхи хаваслă праздник сцена çинче кăтартса панă. Çакă вăл—Советлă Таджикистанри колхозлă хресченсен телейлĕ те пуян пурнăçне кăтартса парать. Çак оригиналлă спектаклĕн авторĕсем таджиксен музыка тата ташă фольклорĕпе анлăн усă курнă (либретто Саид Мурадовăн; музыка С. Баласанянпа С. Урбахăн).

Çак пĕтĕм спектакльсене Мускавра кăтартса пани операн çамрăк артисчĕсем вокальнăй искусствăна вĕренес тĕлĕппе ирттернĕ пысăк ĕçĕн итогĕсене туса парать. Талантлă çамрăк танцорсемпе балетмейстерсен кадрĕсем те ӳссе çитĕннĕ. Операллă спектакльсем ташăсемпе пуянланнă.

Декада валли хатĕрленĕ «Икĕ роза» балет — наципе пĕрремĕш балет — таджик театрĕн пурнăçĕнчи пысăк событи пулса тăрать (унăн музыкине композитор А. Ленский çырнă). Çакă вăл таджиксен балетне çитĕнтерсе ӳстерес задачăна татса панине пĕлтермест. Анчах унăн никĕсĕсене хунă ĕнтĕ. Халăх ташшипе усă курас тĕлĕппе пуçланă анлă ĕçе çине тăрса малалла туса тата тарăнлатса пыни кирлĕ. Балет кадрĕсене хатĕрлес ĕçе пĕр самантлăха та вăйсăрлатмалла мар. Искусство ĕçĕсен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Комитечĕ ятларласах таджиксен балет студине тăвасси çинчен решени йышăннă. Çак студи кăçалхи кĕркунне Ленинградри хореографи училищи çумĕнче уçăлать, таджиксен çамрăк балечĕ валли танцорсем хатĕрлемелле пулать.

Декадăна Таджикистанри Лахути ячĕпе тăракан академиллĕ драма театрĕ хутшăнать. Вăл 10 çул ытла ĕçлет ĕнтĕ, республикăри театр искусствине вăйлатас ĕçе пĕчĕк мар вырăн йышăнса тăнă. Çак театр творчествăллă пысăк çула утса тухнă: концерт программисемпе пысăк мар инсценировкăсенчен пуçласа классиксен пьесисене лартма пуçленă. Декада кунĕсенче драма театрĕ Мускавра 3 спектакль кăтартать. Таджиксен çамрăк драматургĕ Улуг-Заде çырнă «Краснопалочники» пьеса таджик халăхĕ басмачсене хирĕç кĕрешнин эпизочĕсене кăтартса парать. Фирдоуси материалĕсем тăрăх Пир Мухамед-Заде тата Волькенштейн драматургсем «Рустам тата Зохраб» ятлă пьеса çырнă. Декадăн драмăллă 3-мĕш спектаклĕ — Шекспир трагедийĕ «Отелло». Ăна таджик чăлхи çине поэт Лахути куçарнă. Репертуарта çакăн пек тĕрлĕ произведенисем пулни хăех те ĕнтĕ таджик театрĕн пысăк творчествăллă хăюллăхĕ çинчен калать. Кучухнехи материал тăрăх çырнă наципе драматурги произведенийĕсемсĕр пуçне вăл тĕнчери драматургин чи чаплă произведенийĕсене — Шекспир произведенийĕсене вĕренсе алла илме тăрăшать.

Декадăн юлашки концертĕнче совет общественноçĕ таджик халăхĕн вокальнăй искусствипе, музыка тата хореографи искусствипе паллашать. Таджиксен юрăпа ташă ансамблĕ, Памирти юрăпа ташăн этнографиллĕ ансамблĕ, халăх инструменчĕсен оркестрĕ, рубабисткăсен хĕрарăм ансамблĕ—çаксем пурте вĕсем халăх хушшинчен ӳссе тухнă коллективсем, художествăллă пултарулăхăн талантлă участникĕсенчен чăмартанса йĕркеленнĕ коллективсем. Çак коллективсен составне кĕрекен исполнительсене Таджикистанри пур районсенчен те пекех тухнă, унта Горно-Бадахшан автономлă облаçĕнчи исполнительсем те пур.

**Мускавра Таджикистанăн театрпа музыкине кăтартса панипе пĕр вăхăтрах таджиксен изобразительнăй искусствин выставкине организацилеççĕ. Керамика, йывăç çине касса тунă произведенисем, тĕрлĕ йышши тĕрĕсемпе пир-авăрсем — çаксем пулаççĕ ĕнтĕ та

Европăри тата Африкăри вăрçă

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Балканри фронтра, Югославире, Германи войскисем, Германи командованийĕн сводкинче пĕлтернĕ тăрăх, Марибор хулине (Çурçĕр Югославия), Тетово тата Прилеп текен пунктсене (Кăнтăр Югославия) тата Пирота (Çурçĕр Югославия) илнĕ. Германи авиацийĕ Югославире çулсемпе чугунçул сооруженийĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Итали самолечĕсем, тесе каланă Итали командованийĕн сводкинче, Бенковац зонинче, Цара районĕнче, Югославин пĕр çĕрелле пухăнса пырахан войскисем çине бомбăсем пăрахнă. Шибникри портсен сооруженийĕсем çине каллех пырса бомбăсем пăрахнă. Югослави войскисем противника вăйлăн хирĕç тăраççĕ. «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Бернри корреспонденчĕ çырнă тăрăх, Бадуна тăвăсенче тата Пелагора юханшывĕн айлăмĕнче, Прилепа сывăхĕнче, югославсем нимĕçсене вăйлăн хирĕç тăраççĕ.

Югослави войскисен Албанири колонни, «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Бернри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, кăнтăр еннелле, Албани çыранĕ тăрăх малалла куçса пырать. Югославсем Албанири Леш тата Мамурас ятлă хуласене (Çурçĕр-Хĕвеланăç Албания), Албанин çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнче — Кукеспа Бикая туртса илнĕ. Центральнăй Албанире пысăк мар çапăçусем çулса иртне.

Англи бомбардировщикĕсен соединенийĕсем апрелĕн 8-мĕшĕнче купĕпех Кăнтăр Югославире Струмицы районĕнче нимĕçсен мотомеханизированнăй транспорчĕне бронетанковăй колонисем çине пыра-пыра бомбăсем пăрахнă.

Фронтăн Греции участокĕнче, Греци командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, Германин бронетанковăй чăсĕсем, Вардар юханшывĕн айлăмĕ тăрăх пырса кĕрсе, Салоники çине наступлени туса пынă, вĕсем çав хулана кĕнĕ. Вăл чăссене ыран апрелĕн 9-мĕш тенĕ чух сĕрлеччен Килкис ятлă хула (Салоникирен çурçĕр енче) районĕнче малалла кайма памасăр тытса тăнă пулнă. Сводкăра çапла паллă тунă: апрелĕн 9-мĕшĕнче кăнтăрла илнĕ сведениесем тăрăх, Греци войскисем Хĕвелтухăç Македонире (Çурçĕр-Хĕвелтухăç Греци), ывăр положенире кĕрсе ӳкнине пăхмасăрах, чикĕ тăрăхĕнче противника хирĕç тăрассине пĕртте чакарман, вĕсем хăйсен позицийĕсене пĕтĕмпех хăйсен аллинче тытса тăнă.

Салоникине илниç çинчен Германи командованийĕн сводкинче те каланă. Германи войскисем, «Метаксас линине» татса кăснă хыççăн, Ксанти районĕнче те (Салоникирен хĕвелтухăç енче) Эгейски тинĕс хĕррине тухнă. Германи самолечĕсем апрелĕн 10-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Перия районĕ çине умлăн-хыçлăнах тăватă хутчен пырса бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем сĕнен тăвайман.

* * *

Англипе Германи фронтĕнче вăрçă кĕрсекан енсен авиацийĕн ĕçĕ ытларах ыталарах вăйланса пырать. Германи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем, тесе каланă Германи командованийĕн сводкинче, апрелĕн 10-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англия çар промышленноçĕн центрĕ—Бирмингам тата сутуилу тумалли пысăк порт–Ньюкасл çине пырса тапăннă. Кунсăр пуçне Ипсвич тата Саутгэмптон порчĕсем çине те бомбăсем пăрахнă. Германин хĕçпăшаллă вăйĕсем хăйсен операцийĕсене тинĕс çинче те туса пынă. Англи территоринчи шывсенче Англин темиçе суднине путарни çинчен пĕлтереççĕ.

Апрелĕн 9-мĕшĕнче, кăнтăрла, тесе пĕлтернĕ Англин авиаци министерствин коммюникинче, Англи самолечĕсем Дани, Норвеги тата Франçин оккупациленĕ пайĕ çине пырса тапăннă. Брест (Франция) çине, Данири чугунçулсем тата радиостанци çине, çавăн пекех Кăнтăр Норвегири алюминий завочĕсем çине те бомбăсем пăрахнă. Апрелĕн 10-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Берлин çине вĕçсе пырса пысăк калибрлă бомбăсем пăрахнă. Берлин çине тапăнасси виçĕ сехет хушши пынă. Хула центрĕнче нумай çуртсене çĕмĕрнĕ. Англи авиацийĕн ытти соединенийĕсем Эмден тата Çурçĕр-Хĕвеланăç Германири ытти объектсем çине пырса тапăннă. Çав кунах çĕрле Англи самолечĕсем Франçин оккупациленĕ территоринчи пунктсем çине темиçе хутчен те пырса тапăннă.

* * *

Çурçĕр Африкăра, Киренаикăра, тесе каланă Итали сводкинче, Италипе Германин кăнтăр енчен наступлени туса пыракан чăсĕсем Дерна хыçĕнче Ливи çыранĕ тăрăх малалла куçса пыракан войскăсемпе пĕрлешнĕ. Германи сводкинче каланă тăрăх, Германипе Итали войскисем Мекили (Дернăран кăнтăр хĕвеланăç енче 80 километртра) текен пункта илнĕ. Итали самолечĕсем англичансен карапĕсем тата Тобрук порчĕ çине бомбăсем пăрахнă.

Хĕвелтухăç Африкăра операцисем пуринчен ытларах Эритрейăра пулса пынă. Итали сводкинче англичансем Массауа хулине илни тĕрĕс, тесе каланă. Çав хулан портне юрăхăра кăларнă, портри сооруженисене çĕмĕрсе тăкнă. Массауана туртса илнипе, тесе çырать Рейтер агентствин дипломатилĕ корреспонденчĕ, Эритрейăн çурçĕр пайĕнче итальянецсем хирĕç тăрассине çĕнтернĕ. Халĕ ĕнтĕ Хĕрлĕ тинĕс хĕрринче итальянецсен пĕр порт—Ассаб кăна (Эритрейăн кăнтăр пайĕнче) тăрса юлнă, çав порт вăрçă тĕлĕшĕнчен пысăк вырăнта тăмасть.

Рейтер агентствин корреспонденчĕ, Англи войскисем Массауана илнĕ чухне унта пулнăскер, çапла пĕлтерет: çак портшăн юлашки вăхăтри çапăçусем апрелĕн 8-мĕшĕнче кăнтăрла 13 сехетре, Англи командованийĕ порта парăнтарасси пирки вунсакăр сехет хушши ответ илессе кĕтнĕ хыççăн, пуçланнă. Анчах итальянецсем çав сĕнĕве йышăнман, вĕсем Массауана мĕнпур средствăсемпе сыхласси пирки Римран кăтартусем илнĕ пулмалла. Корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, Массауа хулишĕн пынă юлашки çапăçусене Франçин де Голль генерал ертсе пыракан войскисен легионĕ те хутшăннă.

Апрелĕн 10-мĕш. (ТАСС).

Англири хаçатсем Балканри лару-тăру çинчен

ЛОНДОН, апрелĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англин Греции экспедициллĕ çарĕ, халиччен резервра пулнăскер, хальхи вăхăтра пĕр фронтри боевой позицисем çинче татăклă çапăçăва кĕме йăлтах хатĕр тăрать.

«Дейли Мейл» хаçат çапла çырать: халĕ палла пулнă тăрăх, союзниксем Салоникине чăнласах хӳтлес ĕçе организацилеме нихăçан та шутламан. Англи войскисене халиччен çапăçăва кĕртменни çакăнтан килнĕ те ĕнтĕ. Вардар юханшывĕ патĕнчен хĕвелтухăç енчи сектортa (çак юханшыв айлăмĕ тăрăх нимĕçсем наступлени туса пынă) Англи войскисем пулман. Германипе вăрçă пуçлансанах грексем хĕвелтухăç Македонипе Салоникирен тухса кайма хатĕр тăнă. Салоникири халăх хуларан тухса кайнă. Нимĕçсем пушă хулана пырса кĕреççĕ, унта вĕсен войскисем нимĕнле продовольстви те тупма пултараймаççĕ. Хальхи вăхăтра союзниксен командованийĕ Балканри вăрçăн иккĕмĕш тапхăрĕ ăçталла сарăлса пыраççине кĕтет.

Ĕçе пĕлекен çынсенчен илнĕ сведенисем çине кăтартса парса, «Таймс» хаçат çапла çырать: Югослави войскисем Скоплене нимĕçсенчен каялла туртса илме тăрăшаççĕ. Югослави çарĕн Монастира районĕнче кĕрекен чăсĕ союзниксен войскисемпе сыхăну тытса тăрать.

Болгари влаçĕсен мероприятийĕсем

СОФИЯ, апрелĕн 10-мĕш. (ТАСС). Хаçатсем София хулинчи халăхсем хăйсене хăйсем мĕнле тыталамалли йĕрке çинчен влаçсем кăларнă чылай распоряженисене пичетлесе кăларнă. Урам варрипе çурран çӳреме, урамра хаçатсем вулама, 7 çултан çамрăк ачасене урамра çитĕннисемсĕр çӳреме чарнă. Урамсенче ушкăнсемпе пухăнса тăма та юрамасть. Апрелĕн 8-мĕшĕнчен пуçласа Софире трамвайсем каçхине 8 сехетчен кăна çӳреççĕ. Çакăн хыççăн трамвайсем 30 минута хушши перерыв тăваççĕ. Каçхине 10 сехетрен пуçласа трамвайсем çӳремеçĕ.

—o—

КĔСКЕН

▲ США ыйтнă тăрăх Италин Детройтпа Нью-Йоркри консульствисене хупнă.

Нумаях пулмасть конфискацилеме пароходсем çинчи итальянец-моряксене тĕрмесенче начар условисенче тытса усранă пирки Итали посольстви государство департаментне протест панă.

▲ США тинĕс министрĕн заместителĕ Англипе США тинĕс министерствисем хушшинче çыхăну йĕркелесе ямакĕ эрнелĕхе Англине тухса каять. Сăмах кунта хĕпăтал таврашне арендăна е кивçен парасси çинчен ăшăнăнă закона пурнăçа кĕртмелли программа ыйтăвĕсем çинчен пырать.

▲ Глазго районĕнчи (Англия) чугунçул деповĕсенчен пĕринче 2 пин рабочи забастовка пуçланă. Вĕсем ĕç укçине хăпартма тата ĕç условийĕсене лайăхлатма ыйтаççĕ. Забастовка тăвакансем хăйсен хăшпĕр требованийĕсене 3 çул хушши кăлара-кăлара тăратаççĕ ĕнтĕ.

▲ Апрелĕн 9-мĕшĕнче Нью-Йоркри кинотеатрсенчен пĕринче Совет Союзĕнче тунă «Учитель» фильма кăтартма пуçланă. «Нью-Йорк пост» хаçат çапла çырать: «Çакă вăл ĕнтерĕллĕ, реализмлă картина». Хаçат Чирковпа Макарова актерсен вăййине питех те ырласа çырать.

▲ Канадăра доброволецсене çара илме пуçланă. 1941 çулта Канада çарне 116 пин çынран кая мар илмелле.

▲ Витцель тата Бем адмиралсене Гитлер генерал-адмиралсем туса хунă.

▲ Канадăри çар снабженин министрĕ Хау çапла пĕлтернĕ: Канадăра инçете вĕçекен «Мортин» ятлăшши 200 бомбардировщик тăвасси çинчен калаçусем пуçланнă. Бомбардировщиксем никĕр самолетлă пулмалла. Министерство Канадăри авиаци фирмине 39 гидросамолет тума заказ панă. Хальхи вăхăтра Канадăра эрнере 40 самолет туса кăлараççĕ.

Сербири лару-тăру

СТАМБУЛ, апрелĕн 10-мĕш. (ТАСС). «Журналь Д'Ориан» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Бейрутра кашни кун илсе тăмалли çăкăр нормине пĕчĕклетнине хирĕç протест туса тăватăмĕш кун ĕнтĕ забастовка пырать. Хăшпĕр çемьесене памалли нормăсене апрелĕн 1-мĕшĕнчен пулнинчен виçĕ хут пĕчĕклетнĕ. Урамсенче полици бронеавтомобильсемпе çӳрет. Демонстрантсене çийĕнчех хăвалиса салатаççĕ. Полици хĕçпăшалпа усă курать. Демонстрантсемпе полици хушшинче тытăçусем пулса иртнĕ, кунта çынсем хушшинче вилнисемпе аманнисем те пулнă. Халăхсем Бейрут влаçĕсене улăштарма, çавăн пекех çăкăр сутассине организацилеме тата урăх çĕршывсенчен çăнăх турттарса килме чăрмантаракан сăлтавсене пĕтерсе хума ыйтаççĕ.

Америкăн çыранри оборона суднисене Англине пани

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 10-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, США правительстви çыранри оборонăн 10 суднине Англине панă. Кашни суднăн водоизмещенийĕ — 2 пин тонна.

Официальнăй çынсем хушшинче çапла пĕлтернĕ: çак суднăсем сутуилу тумалли пароходсене хӳтлесе çӳреме пултараççĕ, вĕсемпе подводнăй лодкăсене хирĕç кĕрешес ĕçре те усă курма пулать.

Рузвельт секретарĕ Эрли каланă тăрăх, Англине панă кашни карап çинче 4 дюймлă пĕр оруди тата пĕчĕкрех калибрлă темиçе оруди пур. Карапсен тăршшĕ — 175 фут. Суднăсене пурне те 1928—1932 çулсем хушшинче тунă.

Профсоюз организацийĕсен оборона ĕçне вăйлатма пулăшмалла

Осоавиахим членĕсене çар ĕçне вĕрентесси пысăк ĕç пулса тăрать. Пирĕн республикăри пуçламăш организацисем çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе чылай ситĕнӳсем турĕç. Нумай районсенче тата предприятисенче хĕл вăхăтĕнче тактикăллă занятисем туса иртертчĕç. Вăл занятисене çар ĕçĕн çĕнĕ опычĕсене вĕренессине тĕп вырăна хурса иртternĕ. Осоавихаим членĕсем стройра çӳреме, караульнăй службăна, пăшалтан тĕл пеме тата çапăçу вăхăтĕнче пирвайхи пулăшу пама вĕренсе пыраççĕ.

Кăçалхи хĕл йĕлтĕр спорчĕ анлăн сарăлса пынипе уйрăмах палăрса тăрать. Комсомолецсен, профсоюзсен тата колхозниксен Пĕтĕм Союзри йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕсем пулса иртрĕç. Республикăра, районсенче тата хуласенче йĕлтĕрпе мала тухас енĕпе ăмăртусем ирттernĕ. Кунсăр пуçне осоавиахимовецсен командăллă йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕсем пысăк пахалăхпа иртнĕ. Çак ăмăртусен участникĕсем тăван çĕршыва сыхлама яланах хатĕр тăнине кăтартрĕç. Вĕсем йĕлтĕрпе çӳреме, сăртсем çинчен те пĕр хăрамасăрах ярăнса анма хăнăхрĕç.

Осоавиахим членĕсене çар ĕçне вĕрентес çĕрте хĕл вăхăтĕнче тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармалла мар. Предприятисенче тата колхозсенче оборона ĕçне анлăн сарса пымалла. Осоавиахим организацийĕсен профсоюз организацийĕсемпе тачăн çыхăнса ĕçлемелле. Анчах Осоавиахим тата профсоюз организацийĕсем ку таринччен пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлеме тивĕслипех тытăнман-ха.

Предприятисенче тата артельсенче профсоюз комитечĕсем Осоавиахим организацисене çитĕлексĕр пулăшаççĕ. Хăшпĕр профсоюз работникĕсем оборона ĕçне кирлĕ пек хакламаççĕ. «Осоавиахим организацисен ĕçне мĕншĕн хутшăнас, вĕсен хăйсен работникĕсем пур, ĕçлеччĕрех»,—тесе калакансем те тĕл пулаççĕ. Профсоюзăн çакăн пек работникĕсем предприятисенче, учрежденисенче тата организацисенче оборона ĕçĕ мĕнле пыни çинчен пачах пĕлмеççĕ.

Профсоюз организацийĕсем оборона ĕçĕнче пысăк пулăшу пама пултараççĕ. Вĕсем укçа-тенкĕ те çитĕлеклĕ уйăраççĕ. Апла пулин те вĕсем çав укçапа усă курни çук. Хăшпĕр профсоюз обкомĕсем оборона ĕçĕ валли уйăрнă укçана кашни çулах усă курмасăр хăварараççĕ. Çав вăхăтрах предприятисенче çар ĕçне вĕренмелли хатĕрсем çитмеççĕ. Хăшпĕр çĕрте противогазсем те çук.

Государство учрежденийĕсенчи работниксен профсоюзăн обкомĕ çак кунсенче вырăнти комитетсем мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе тухрĕ. Çакăн хыççăн вырăнти комитетсем Осоавиахимăн пуçламăш организацийĕсене çитĕлексĕр пулăшни пăлăрчĕ. Профсоюз членĕсене Осоавиахим членне явăстарас тĕлĕшпе сахал ĕçлеççĕ. Тĕрĕсленĕ 15 комитет тăрăх профсоюзра пурĕ 910 çын ытла тăраççĕ. Çак хисепрен Осоавиахим членĕнче 445 çын кăна шутланать.

Куславкка районĕнчи комитетра профсоюз членĕсем 102 çын, вĕсенчен Осоавиахим членĕсем 12 çын çеç шутланаççĕ. Красноармейски, Кувакино, Пăрачкав, Элĕк районĕсенче те профсоюз членĕсем Осоавиахим ретĕнче пурте тăмаççĕ.

Профсоюзра тăраканасене Осоавиахим членне явăстарасси Калинински тата Октябрьски районсенче уйрăмах япăх пырать. Çак районсенчи комитетсем профсоюз членĕсенчен Осоавиахим членĕнче миçе çын тăнине пĕлмеççĕ. Осоавиахимăн пуçламăш организацийĕсемпе çыхăнса ĕçлемеççĕ.

Профсоюз членĕсем хушшинче оборона значокĕсен нормисене парасси юлса пырать. Государство учрежденийĕсенчи работниксен профсоюзĕнче тăракансенчен ПВХО, ГСО, «Ворошиловский стрелок» значокĕсен нормисене 8—15 процент кăна панă. ГТО значкисчĕсем унтан та сахал шутланаççĕ.

Элĕк районĕнче госучреждени работникĕсен профсоюзĕн членĕсем 86 çын. Вăл хисепрен оборона значокĕн нормисене пĕр çын та паман. Куславккара профсоюз членĕсем 102 çын, вĕсенчен ПВХО значокĕн нормисене 6 çын кăна панă. ГСО, ГТО тата «Ворошиловский стрелок» значокĕсен нормисене паниçем пачах çук. Госпланри профсоюз комитечĕ тăрăх «Ворошиловский стрелок» тата ГСО значокĕсен нормисене пĕр çын та паман.

Оборона ĕçĕ ытти профсоюзсенче те çитĕлексĕр пырать. Ку вăл профсоюз комитечĕсем Осоавиахим организацийĕсемпе пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлеменнинчен килет. Осоавиахимăн район совечĕсем профсоюз комитечĕсемпе ĕçлессине хакламаççĕ, комитетсенче пулмаççĕ. Осоавиахимăн Вăрнар район совечĕн председателĕ Малов юлташ унта 5 çул хушши ĕçлет. Çак çулсенче государство учрежденийĕсенчи работниксен профсоюзăн комитетĕнче пĕр хутчен те пулман.

Профсоюз организацийĕсен оборонăпа физкультура ĕçне анлăн сарса пымалла. Сметăпа пăхнă укçа-тенкĕпе тĕрĕс усă курас пулать. Вĕсен кулленхи ĕçре Осоавиахим организацийĕсемпе таччăн çыхăнса ĕçлеме тытăнмалла. Çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе активăвăтсарса ĕçлени кирлĕ.

С. АСТАФЬЕВ.

Государство учрежденийĕсенчи работниксен профсоюз обкомĕн председателĕ.

Хулари стена хаçат редакторĕсен семинарĕ

Апрелĕн 10-мĕшĕнче, ВКП(б) Шупашкар горкомĕн парткабинетĕнче, хулари стена хаçат редакторĕсен семинарĕ пулса иртрĕ. Унта 55 çын пулчĕ.

Семинарта «Большевистская печать» журналăн инструкторĕ К. Кузовлев юлташ Майăн 1-мĕш ячĕпе тухакан стена хаçат номерне мĕнле йĕркелесе кăлармалли çинчен калаçу ирттерчĕ. Çавăн пекех, вăл учрежденисемпе наркоматсенчи стена хаçачĕсем мĕнле пулмалли çинчен те, вырăнти примерсене илсе, тĕплĕн каласа пачĕ.

СУД

Растратчика айăплана

ИШЛЕЙ. Оточево ялсоветĕнчи налог агенчĕ К. Ершов государство укçине салатса пурăннă. Вăл документсене пытарса налог укçине хăй кăсъине чикнĕ пулнă. Ревизи комиссийĕ Ершов 2.800 тенкĕ ытла растрата тунине шыраса илмелле турĕ.

Халăх сучĕ Ершова 4 çуллăха тĕрмене хупса лартмалла тата растрата укçине шыраса илмелле турĕ.

С. АНДРЕЕВ

Камăн асăрхамалла?

Шупашкар хулине таса тытасси çинчен канашлусем туса иртternĕ, резолюцисем йышăннă хыççăн ирĕксĕрех çакăн пек ыйту тухса тăрать:

— Шупашкар урамĕсене, общежитисен килкартисене çӳп-çапсенчен, тислĕкрен тата ытти тасамарлăхсенчен тасатнине, çав тасамарлăхсене ăста илсе кайса тăкнине камăн асăрхамалла?

Çак ыйту çине: хула Совет исполкомĕн горкоммунхозĕ асăрхамалла, тесе ответ парĕç. Анчах та çак ответ пушă, никама ĕнтерме пултарайман ответ пулать. Мĕншĕн тесен, хулана мĕнле таса тытнине никам та асăрхаса тăмасть. Çакна пулах Карл Маркс урамĕсĕр пуçне ытти урамсене никам та тасатмасть. Урамсенчи, килкартисенчи тасамарлăхсене Чебоксарка сыранĕ хĕрне кăларса тăкаççĕ. Чебоксарка — хула центрĕнче, вăл тĕрлĕ тасамарлăх тăкмалли вырăн мар.

Çак йĕркесĕрлĕхе нумайччен тӳсмелле пулать-ши?

Р—н.

Вăрман хатĕрлес, турттарас кăларас тата кирлĕ пункта турттарса пырас тĕлĕшпе обязательнăй йĕркепе пана плана Чăваш республикинчи районсем мĕнле тултарса пынине кăтартакан

СВОДКА

(1941 çулти апрелĕн 5-мĕшне, процентпа)

Районсем	Хатĕрленĕ	Турттарнă	Кирлĕ пункта турттарса пынă
Улатăр	81,7	81,7	69,8
Кувакино	70,5	72,0	102,8
Первомайски	62,3	68,5	88,6
Пăрачкав	117,6	60,6	67,4
Чкаловски	103,2	77,6	—
Комсомольски	89,9	89,0	—
Йĕпреç	87,6	61,5	103,6
Канаш	85,6	71,4	—
Шăхасан	72,4	83,2	—
Вăрмар	104.1	100,1	—
Тăвай	101,4	78,4	—
Вăрнар	108,7	79,6	100,4
Калинински	113,5	106,5	97,6
Красноармейски	108,3	68,2	98,7
Çĕмĕрле	97,3	77,5	100,9
Элĕк	131,4	88,2	70,8
Хĕрлĕ Чутай	108,5	70,7	104,5
Советски	90,5	68,8	92,5
Етĕрне	74,9	80,1	—
Сĕнтĕр	74,4	58,3	—
Сĕнтĕрвăрри	95,9	83,1	—
Шупашкар	113,2	100,6	—
Ишлей	136,9	73,9	—
Октябрьски	96,5	99,4	—
Шăмăршă	88,4	93,6	68,5
Елчĕк	94,3	78,6	—
Сĕрпӳ	—	—	—
Куславкка	—	—	—
Республикипе	96,9	82,4	98,4

—o—

Предприятисемпе учрежденисенчи стена хаçат редакторĕсен канашлăвĕ

СĔНТĔР. Апрелĕн 9-мĕшĕнче район центрĕнчи предприятисемпе учрежденисенчи стена хаçат редакторĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта районри хаçат редакторĕ Н. Емельянов юлташ XVIII партконференци итогĕсем тата предприятисемпе учрежденисенчи стена хаçачĕсен задачисем çинчен доклад туса пачĕ.

Стена хаçачĕсен редакторĕсем хăйсем мĕнле ĕçлесе пыни çинчен тухса калараççĕ. Çавăн пекех, вĕсем ĕçри çитменлĕхсене пĕтермелли майсене кăтартса хăварчĕç.

С. НАЛИМОВ.

Атăл çинче

Атăл шывĕ юлашки талăк хушшинче 6 сантиметр хăпарнă.

Шыв горизончĕ 42 сантиметра çитнĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

По приговору народного суда 3-го участка гор. Чебоксар

от 31 декабря 1940 г. за № 546, за растрату средств Чебоксарской арт ли „Кожупряжь" в сумме 10 68 руб. 82 коп., у растратчика Рязановой Пелагеи Дмитриевны

ПРОДАЕТСЯ

ДЕРЕВЯННЫЙ ДОМ,

размером 7х6 арш., по ул. Чувашская, 29.

Согласно ст. 73 инструкции Наркомюста СССР о порядке исполнения судебных решений, дом продается государственным, кооперативным и общественным организациям по страховой оценке Госстраха. Торги состоятся 14 апреля с г. в нарсуде 1-го участка гор. Чебоксар.

ЗАКЛЮЧИТЕЛЬНЫЙ БАЛАНС

Анаткасинской промартели „Вперед" системы Чуваштарпромсоюза на 1-ое января 1941 года (в тыс. руб.)

АКТИВ	Сумма: На 1-ое января 1940 г.	Сумма: На 1-ое января 1941 г.	ПАССИВ	Сумма: На 1-ое января 1940 г.	Сумма: На 1-ое января 1941 г.
Основные средства	31,5	58,7	Фонды	56,2	66,8
Предметы, не относимые к основным средствам	3,4	3,4	Резерв предстоящ. платеж.	—	0,1
Сырье основное, вспомогательные мат. и топ.	17,6	34,6	Наложения на тов. в разн. предпр.	—	0,7
Незавершенное производ. и полуфабр.	4,4	4,4	Долгосрочные кредиты	28,5	23,5
Готовая продукция и товары по с стоим.	35,1	22,5	Краткосрочные кредиты	7,8	23,8
Товары с рознич. предпр. по розн. ст.	—	3,5	Кредиторы	15,1	17,0
Товары отгруженные	11,1	7,9	Прибыли	23,5	27,2
Денежные средства	6.3	18,0			
Дебиторы	2,7	1,0			
Расходы будущего времени	5.8	2,7			
Отвлеченные средства	13,2	22,4			
БАЛАНС	131,1	159,1	БАЛАНС	131,1	159,1

Результаты хозяйственной деятельности

Убытки			Прибыли		
Убытки от эксплоатации собств. трансп.	—	0,4	Доходы от реализации продукции	24,3	28,6
Расходы и убытки разные	0,8	1,0	Убытки отчетного года	—	—
Чистая прибыль	23,5	27,2			
БАЛАНС	24,3	28,6	БАЛАНС	24,3	28,6

Председатель правл. артели **Карташов.**
Старший бухгалтер **Ив. Алексеев**

Настоящий баланс рассмотрен и утвержден балансовой комиссией Чуваштарпромсоюза от 23 января 1941 года за № 7.
Председатель балансовой комиссии **Безубиков.**
Секретарь балансовой комиссии **Виногradов.**

Пулă мĕншĕн çук?

Пирĕн республикăн пулă ĕрчетме тата тытма пысăк майсем пур. Анчах, суту-илу организацисенче те, столовăйсенче те пулă çук. Мĕншĕн?

Хуçалăхшăн юратса тăрăшни кирлĕ. Пулă хуçалăхне те кулленкун сăнаса, пăхса тăрас пулать. Чăвашрыбтрест, пулă тытас тĕлĕшпе чи пысăк вырăн йышăнса тăраканскер, хăй хуçалăхĕшĕн тăрăшмасть. Унăн руководителĕсем пĕрмаях çакăн пек ыйтупа хăшкăлаççĕ:

— Мĕншĕнха пулă тытас план аркăнса пырать?

Чăн та ĕнтĕ, плана çулран çул тултараймаççĕ. План пурнăçланманнинчен сăлтавĕсем акă мĕнре: Рыбтрест тата унăн артелĕсем пулă ĕрчетессинчен тата пулă вырăнĕсене тĕрĕс пăхса усрассишĕн кĕрешмеççĕ; пулăссем хушшинче ĕç дисциплини çавтери начар.

Трест пĕрремĕш кварталта 500 центнер пулă тытма палăртнă пулнă. Тытасса 276,5 центнер кăна тытнă, е вăл 55,3 процент пулать.

Тĕслĕхшĕн, Шашкарти (Сĕнтĕр р.) артель ĕçне илсе пăхăпăр. Вăл кварталăн планĕнче 25 процент йышăнать. Мĕн куратпăр-ха эпир кунта?

Пулă тытмалли вырăнсене пăхса тăмаççĕ, пулăссем хушшинче ĕç дисциплини сӳрĕк. Житков ертсе пыракан 2-мĕш бригада пĕр кун ĕçлет те, пĕр эрне эрех ĕçет. Уйрăмах ку тĕлĕшрен кĕсменçĕ Наратов палăрса тăрать. Çакна пула унăн ĕçе тухманнисем те часчасах пулкалаççĕ.

Артель председателĕ Корчагин юлташ хăй куçĕ умĕнче мĕн пулса пынине те пĕлмест. Шашкар артелĕн пĕрремĕш кварталта 125 центнер пулă тытмалла пулнă пулсан, 52 центнер çеç тытнă.

Пăрачкаври артельре те ĕçсем Шашкартинчен чаплах мар. Унăн пулă тытмалли вырăнсем питех те нумай. Анчах вĕсем пурте йĕркесĕрлĕхе тухнă.

Артель 42 пулăçа пĕрлештерсе тăрать, ĕçлессе 20—21 çынтан мала ĕçлемеççĕ, ĕçе тухмасăр тăракансем ытларах хăйсем валли пулă тытма кăмăллаççĕ.

Артель председателĕ Артамонов юлташ çулсерен:

— Эпир плана пурпĕрех ирттерсе тултаратпăр,—тесе сӳпĕлтетет.

Анчах план уйăхран-уйăха тулмасăр юлать. Чăн та, январьти плана 200 процент тултарнă, анчах квартал планне 70 процент кăна пурнăçланă.

Рыбтрестăн (управляющийĕ Трофимов) хăйĕн ĕç меточĕсене тĕпренех улăштарас пулать, артельсенче ĕç дисциплинине йĕркелесе ямалла. Пулă тытакан кашни колхоз, кашни бригада плана уйăхран уйăха тултарса пыма тивĕç.

* * *

Столовăйсен тата ресторансен Шупашкарти тресчĕ кăçалхи çулăн пуçламĕшĕнче пулă хуçалăхĕ организацилерĕ. Кирлĕ те лайăх ĕç. Анчах трест руководителĕсен пуçланă ĕçе вĕçне ситерме тӳсĕм çитеймен. Пулă тытма кирлĕ хатĕрсем илсе хунă, исполнитель тытнă, план тунă... Анчах чи кирли—хуçалăха куллен ертсе пырасси—паян кун та çук.

Пулă тытас енĕпе ĕçлекен исполнитель Иванов юлташ нимĕскер те тумасть, çавăн пекех пулăссен бригади те нимĕскер те тумасть. Акă, пĕрремĕш кварталта 16 центнер пулă тытма палăртнă пулсан... 39 килограмм кăна тытнă.

Трестăн заготовка отдел заведующийĕ Петухов юлташ çакна исполнитель Иванов начар ĕçленипе ăнлантарать.

Тӳрех калăпăр, ĕç Иванов çинче çеç мар. Пысăкрах айăплĕ трест руководителĕсен çавăрнăçусăрлăхĕ çине ӳкет, вĕсем çĕнĕ хуçалăх хăй тĕллĕнех лайăх ĕçлĕ-ха, тесе лараççĕ.

* * *

Шупашкарти «Пекарь» артель те пулă тытма лайăх план тунă. Унăн 1-мĕш кварталта 60 центнер пулă тытмалла пулнă, лăп та май 2 центнер тытнă.

Сăлтавĕ мĕнре-ха?

Артель правленийĕн председателĕ акă мĕн пĕлтерчĕ:

— Пире чи начар вырăнсене уйăрса панă. Илĕпĕр, Иваново çывăхĕнчи Ельниковски кӳллине. Ку кӳлĕре колхозниксем кантăр тата йĕтĕн хутаççĕ, çавăнпа та пулă ĕрчемест. «Кустояр» ятлă кӳлĕре вĕтлĕх ӳссе ларнă... Кӳлĕсене пурне те тасатмалла. Эпир кредита кӳлĕсене йĕркене кĕртме расходлатпăр...

— Мĕçе тенкĕ?

— 134 пин тенкĕ.

Кредитне илес пулсан,—вăл çук.

Чăвашпромсоюз пулă хуçалăхне аталантарса пыма план тунă, анчах плана пурнăçа кĕртме укçа-тенкĕ тупса пама тăрăшмасть.

Пулă хуçалăхне организацилеме «Пекарь» артель 30 пин тенке яхăн расходланă. Чăвашпромсоюз кредит тупса пама пулнă. Чăннипе нимĕн те туман. Халĕ ĕнтĕ çак расхода артелĕн оборотри средствинчен витме хушать. Паллах, кăна артель тума пултарайманскер.

Артелĕн 15 пулăç. 3 уйăх хушшинче вĕсем 2 центнер пулă тытма пултарнă. Çакна валли мĕнпурĕ 1025 ĕçкунĕ тухнă. Çапла, кашни пулăç кашни кун 2 грамран та сахалтарах пулă тытнă.

Кулăшла та, кӳренмелле те!

Çакăнта илсе кăтартнă тĕслĕхсем пулă мĕншĕн çуккине аванах кăтартса параççĕ. Çав вăхăтрах республикăра пулă тытас плана уйăхран-уйăха тултарса пыма кирлĕ условисем çителĕклĕ. Артельсен пулă тытмалли лайăх хатĕрсем ытлашшипех пур.

Пулăссене ВКП(б) XVIII конференцийĕн решенийĕсемпе хĕçпăшаллантарни кирлĕ. Вырăнти парторганизацисен пулă тытакан артельсенче çакна асра тытса ĕçлес пулать. Ĕç дисциплинине пăсакансене тата кахалсене хирĕç пĕр шеллемесĕр кĕрешсе пымалла, массăллă ĕçе кирлĕ пек организацилемелле.

ПОТРЕБИТЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн —4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн—2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн—5—23, «Ленин çулĕпе» журналăн—0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 2987.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР Заказ № 227. ф. б. 58. 84 п. л.